Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АВГУСТ 30 ЫТЛАРИКУН 200 (5013) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Шупашкар, ул. Володарского, 5. Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 3—67, ред. заместителĕн—3—67, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—88, ялхуçалăх пайĕн—4 — 67, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—7—67, ялкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйăн — 6—23.

Стаханăвла йухăм—хăватлă вăй

Виçĕ çул каялла, 1935 çулти августăн 30-мĕшĕнче Донбасри „Центральная—Ирмино" шахтинче ĕçлекен забойщик Алексей Стаханăв отбойнăй мăлатукпа ĕçлесе 6 сехет хушшинче 102 тонна çĕр-кăмрăкĕ кăларнă. Вăл вăхăтра пирĕн шахтерсем сменăра пĕр çын пуçне 6—7 тонна кăна кăларнă. Çапла вара Алексей Стаханăв 14 нормă тултарса, кăмрăк кăларас ĕçре никçан та, нисçта та пулман ÿсĕм тунă. Çакăн çинчен хыпар Совет çĕршывĕ тăрăх çиçĕм пек хăвăрт саралчĕ.

Çакăн хыççăн Аслă Совет çĕршывĕн пур кĕтесĕсенче те стаханăвĕçсем çуралма пуçларĕç. Горькири Молăтăв ячĕпе тăракан автосавăтри тимĕрç Александр Бусыгин Америкări тимĕрçсене хуса çитсе иртсе карĕ. Донецк чукун-çулĕ çинчи машинист Петр Кривонос пуйăссене нихăçанхинчен пысăк хăвăртлăхпа илсе çÿреме пуçларĕ. Ленинградри „Скороход" хапракĕнчи рабочи Николай Сметанин малтанхинчен икĕ хут ытларах ботинкăсем тума тытăннă. Рекорд хыççăн рекорд çуралма пуçларĕ. Стаханăвла йухăм ялхуçалăхĕнче те вайлан сарăлма пуçларĕ. Марийа Демченко пĕр гектар çĕр çинче 500 тонна таран сахăр кăшманĕ туса илчĕ.

Стаханăвла йухăм сасартăк пуçланчĕ. Апла пулин те вăл ăнсăртран, кĕтмен çĕртен килсе тухман. Вăл йухăма социалисăмлă хуçалăхăн аталанăвĕ, массăсен социалисăмлă ăмăртăвĕ хатĕрленĕ. Пирĕн çĕршывра експлоатаци çук. Рабочисен пурнăçĕ тĕпрен лайăхланчĕ. Пирĕн çĕршыв çĕнĕ техникăпа хĕçпăшалланчĕ. Пирĕн çĕршывра çĕнĕ техникăна çĕнсе илнĕ кадрсем ÿссе çитĕнчĕç. Çаксем пурте вĕсем стаханăвла йухăма вăйлăн саралма май пачĕç.

Стаханăвла йухăм вăл—социалисăмлă ăмăртăвăн çĕнĕ çĕкленĕвĕ, социалисăмлă ăмăртăвăн çÿлĕ пусăмĕ, вăл революцилĕ тарăн йухăм. Стаханăвла йухăмăн социалисăм строительствинчи пахалăхĕ питех те пысăк. Сталин йулташ стаханăвĕçсен Пĕтĕм Сойузри пĕрремĕш канашлăвĕнче: „стаханăвĕçсем, пирĕн промышлĕннăçра новатăрсем пулни, стаханăвла йухăм пирĕн индустрин малашлăхĕ пулса тăни, унăн ăшĕнче рабочи клас малашне культурăпа техникă тĕлĕшĕнчен хăпарассин тĕшĕ пурри, стаханăвла йухăм уçса паракан çулпа пырсан кăна социалисăмран коммунисăма куçма тата ăспуçпа физически ĕç хушшинчи хирĕçлĕхе пĕтерме кирлĕ ĕç тухăçлăхĕн çÿлĕ виçисене çитме май пурри пăлла мар-и вара", тенĕ. Сталин йулташ калать: стаханăвла йухăмăн пахалăхĕ „...вăл социалисăмран коммунисăма куçма условисем хатĕрленинче пулать".

Стаханăвла йухăм ĕççыннисен анлă массине çĕклерĕ. Халĕ стаханăвĕçсем çĕршывăн пур кĕтесĕсенче те, халăх хуçалăхĕн пур участкисенче те çĕршерĕн, пиншерĕн шутланаççĕ.

Канашри вакунсем йусакан савăтри тимрĕç—стаханăвĕç Кукăрйĕв йулташ йертсе пыракан бригадă нормăна 700 процентран пуçласа 900 процента çити тултарать. Бригадă членĕсем кунсерен 90—120 тенкĕ ĕçлесе илеççĕ. Çĕнĕ стройкăри Çилверстăв, Чапрайĕвă йулташ бригадисем икшĕр нормă тултарса ĕçлесси патне çывхарнă. Шупашкарти тир-сăран савăтĕнчи стаханăвкă Скачкова йулташ çулталăкри плана 7 уйăх хушшинче тултарнă т. ыт. те.

Ялхуçалăхĕнче те стаханăвла йухăм анлăн сарăлчĕ. Вăл çакăнтан та лайăх курăнать: 1933 çулта республикăра çурхи ĕçĕ пĕр уйăх таран пынă пулсан, 1937 çулта 13 кун хушшинче акса пĕтерни,

1938 çулта тата та хăвăртрах—8 кун хушшинче акса пĕтернĕ. Ялхуçалăхĕнче машинă техникине алла çавăрса илнĕ стаханăвĕçсем пысăк ĕç тухăçлăхĕ параççĕ. Иелчĕкри МТС комбайнерĕ Кушманăв йулташ кăçал тыра пуçтарса кĕртнĕ чухне кунне 30 гектар ĕçлесе пынă. Шанкăртам МТС-чи Чекушкин комбайнер пĕр кун хушшинче 35 гектар тырă вырнă. Кунашкал стаханавĕçсем республикăра çĕршерен шутланаççĕ. Стаханăвла йухăм ытти отрăçлĕсенче те вăйлансах пырать.

Стаханăвĕçсем халăх хуçалăхĕн пур участкисенче те кивĕ техникăлă нормăсене çĕмĕрсе, çĕнĕ нормăсем тăваççĕ.

Ĕçлев паттăрĕ, стаханăвĕç пулас, çĕршывăн мухтавлă ÿсĕмсем тăвас—çакнашкал çĕклеÿпе ĕçлеççĕ пирĕн çĕршыври ĕççыннисем. Троцкисла-бухаринла шпионсем, сатăрçасем ĕççыннисен творчествалă çĕкленÿне—стаханăвла йухăма пусарма тăрăшнă. Пирĕн парти стаханăвла йухăм çулĕ çинчен халăх тăшманĕсене шалса ывăтрĕ. Сатăрçасене аркатса тăкни, вĕсен сийенлĕ ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерсе пыни стаханăвла йухăма вайлăн сарăлса пыма май пачĕ.

ПСК(б) Парти Тĕп Комитечĕ 1937 çулта декабĕр уйăхĕнче „Мускавпа Мускав облаçĕнчи хапрăк-савăтсенчи стаханăвĕçсем чĕнсе калани" пирки йышăнна постановленире стаханăвла йухăма йертсе пырас тĕлĕшпе йанăшсенчен сыхлантарса, ăна массăлă йухăм туса çĕклентерсе пымалли тĕрĕс çул кăтартса пачĕ. Массăлăх,—акă мĕнре стаханăвла йухăмăн хăватлă вăйĕ. Вăл халĕ чăннипех те массăлă йухăм пулса пырать. Çĕмĕрлери „Большевик" савăтра ĕçлекен пĕтĕм рабочисен хисепĕнче 72,5 проценчĕ стаханăвĕç ем. Çавна пула савăт хайĕн планне йалан тултарса пырать. Деткомиççин Шупашкарти хапрăкĕнче ĕçлекенсен хисепĕнче стаханавĕçсем 50 процент ытла шутланаççĕ. Хапрăк çулталăкри плана 8 уйăх хушшинче тултарнă.

Анчах калас пулать, стаханăвла йухăм пур çĕрте те тивĕçлипе сарăлса пымасть-ха. Вырăнти промышлĕннăç тата строительствă ĕçĕ йулса пыни çавăн çинчен калать те. Чăваш стройтрестра стаханăвла ĕçлекенсене шута илессине те йеркелемен. Кунта, терĕссипе илсен, стаханăвла йухăма йертсе пымаççĕ.

Стаханăвла йухăма чăн-чăн массăлă йухăм туса хурасси—партипе профсойуз органĕсен тата хуçалăх организаци руководителĕсен кулленхи хисеплĕ задачи пулса тăрать. Ку задачăна пурнăçа кĕртме чи малтан кашни участкăра кашни рабочи валли стаханăвла ĕçлеме условисем туса пани кирлĕ. Пĕтĕм ĕçре çирĕп организацилĕх тумала. Рационализаципе изобретательствă ĕçне çĕклемеле.

Стаханăвла йухăма чăн-чăн массăлă йухăм тăвас ĕçре стаханăвĕçсен паха опычĕсене сарасси рабочисен, колхозниксен анлă массине ĕçĕн техникине вĕренме пулăшасси пысăк вырăн йышăнать. Стаханăвĕçсен йышлă резерви вăл—промышлĕннăçри, транспартри, социалисăмлă ялхуçалăхĕнчи, культурă фронтĕнчи ударниксемпе отличниксем. Вĕсене пирĕн пур майсемпе те стаханăвĕçсен ретне тăма пулăшас пулать. Парти, профсойуз тата хуçалăх организацийĕсен задачи—стаханăвла йухăма пур майсемпе те вăйлатса пырасси, стаханăвла йухăмăн аслă çулĕ çинчен пур чăрмавсене те сирсе пырасси пулать.

Салам стаханăвĕçсен йышлă çарне!

Стаханăвла йухăмăн тăваттăмĕш çулĕ социалисăм строительствинче тата та пысăкрах çĕнтерÿсем тумали çул пултăр!

Кĕракинчи стаханăвĕçсем

Кăпасри (Тутаркас р.) „Ким" колхозри бригадăсем çитес çулхи вăйлă тырпулшăн ăмăртăва хатĕр пуçăрса пыраççĕ. Кĕрхи тырăсене акмали уйсене малтан тислĕк тата минераллă удобренисем тăкса çем çетрĕç. Акмали вăрлăхсене лайăх тасатса, вутпуççăрен чÿхерĕç. „Ким" колхоз 54 гектар çинче суртлă ирăш, 7 гектар çинче суртлă тулă акса хăварнă. Акмали пĕтĕм лаптăкран 95 процентне çейăлкăсемпе акнă.

Кĕрхи тырăсене акнă çĕрте çĕнĕрен стаханăвĕçсем палăрчĕç. Акă, çейăлкăпа акакансем—Н. Скворцов, Ф. Илларионăв колхозниксем нормăпа 4 гектар акас вырăнне, 8,75-шер гектар акса пычĕç.

Колхоз çак кунсенчех акăн çапса пĕтерет.

С. Савелйĕв.

Хаçатсен парти пурнăçĕ пайĕсен пуçлăхĕсен канашлăвĕ

Августăн 28-мĕшĕнче Мускавра облаçсенчи, крайсенчи тата республикăсенчи хаçатсен парти пурнăçĕ пайĕсен пуçлăхĕсен канашлăвĕ уçăлнă. Вăл канашлăва ПСК(б)П Тĕпкомĕ пухнă. Канашлăва 150 çынна йахăн пуçтарнă.

Вырăнсенчен докладсем итленĕ. Канашлу 3—4 кун тăсăлать.

(ТАСС).

Алексей Стаханăв

ПРИЗЫВ УМĔН

Тир-сăран савăтĕнчи стаханăвĕç-призывниксем

Шупашкарти тир-сăран савăчĕ çулсеренех Хĕрлĕ Çар ретне сывлăхлă та хут лайăх пĕлекен çамраксем парать. Савăтра ÿссе çитĕнĕ стаханăвĕçсемпе ударниксем Хĕрлĕ Çарăн тĕ лĕ пайĕсенче пулса, тăван çĕршыва хисеплĕн те чыслăн сыхлаççĕ. Алексейĕвпа Андрейĕв йулташсем Хĕрлĕ Çара кайиччен савăтра фрезеровщик пулнă. Халĕ вĕсем иккĕше те Инçет-Хĕвелтухăç чиккинче совет пограничникĕсен йатне тÿррĕн тытса пыраççĕ. Тăван çĕршыва сисĕмлĕн сыхлаççĕ.

Кăçал та тир-сăран савăтĕнчен Хĕрлĕ Çар ретне кайма 11 çамрăк призыва кĕрет. Призывниксем призыв кунне пысăк хаваслăхпа кĕтеççĕ. Призыв умĕн хăйсем çине илнĕ социалисăмлă обйазательствăсене ăнăçлăн пурнăçларĕç. Малтан ĕç нормине тултарса пыраймаи призывниксем йулашки вăхăтра чи лайăх стаханăвĕçсем пулса тăчĕç.

Призывник Иван Асафйĕв йулташ савăтра 1933 çултанпа ĕçлет. Малтанах вăл ĕç йĕркине сахал пĕлнĕ, кулленхи ĕç нормине тултарайман. Халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ: кадрсем пурне те татса пăраççĕ, тенине йаланах асра тытса, вăл часах ĕç техникине вĕренчĕ, политкружоксене çÿресе политикăла пĕлĕвне ÿстерчĕ, стаханăвĕçсен паха ĕçĕсемпе паллашрĕ. Ĕç техникине алла илсе, кулленхи ĕç нормине 200—250 процентшар тултарса пыма пуçларĕ. Комсомол ретне кĕрсе общĕствăлă ĕçсенче активлăн хутшăнчĕ. ССРС, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем вăхăтĕнче агитатăр пулчĕ, пур хушнă ĕçсене те тÿррĕн пурнăçласа пычĕ. Çаксене курă ăна раскройнăй цех начальникĕ пулса ĕçлеме куçарчĕç. Çĕнĕ ĕçе часах хăнăхса çитрĕ. Вăл йертсе пыракан цех чи малти рете тухрĕ.

Цех начальникĕ пулса ĕçленипе пĕрлех вăл Осоавиахим взвочĕн политрукĕ, комсомол организатăрĕ пулса ĕçлет. Призыва хатĕрленнĕ май, призывниксене „ПВХО" тата „Ворошиловский стрелок" значок нормисене пама вĕрентрĕ. Вĕреневе 29 çын хутшăнтарнă.

Призывник Çергей Кудрйавцĕв йулташ та савăта кĕнĕренпе стаханăвĕç, активлă общĕственник пулса тăчĕ. Халĕ вăл раскройщик пулса ĕçлет. Уйăхри ĕç нормине 214—215 процентшар тултарса пырать. Призыв умĕнхи вĕренÿре отличнă паллăпа вĕренсе тухрĕ. „Ворошиловский стрелок" значок нормине панă. Вĕсенчен Прокопий Никифăрăв, Леонид Тимофейĕв, Алексей Соловйов, Иван Павлăв призывниксем те йулмаççĕ. Вĕсем призыв умĕнхи вĕренÿре Хĕрлĕ Çар уставне, строй йĕркисене, çар хатĕрĕсем çинчен лайăх вĕреннĕ. Çуллахи вăхăтра сывлăха çирĕплетнĕ. Çавăнпа та вĕсем, призыв комиççи хăйсене Хĕрлĕ Çара илессе шансах тăраççĕ.

В. Васйлйĕв.

Срук çитиччĕнех Хĕрлĕ Çара йама ыйтаççĕ

Çĕнтăбĕрĕн 1-мĕшĕнчен 1917—1918 çулсенче çуралнă ĕççамрăкĕсене Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс Çар тата Хĕрлĕ авиаци флочĕ ретне илме пуçлаççĕ. Çак куна кашни призывник пĕтĕм чĕререн савăнса кĕтет.

Пирĕн орденлă Чăваш республикинчи çамрăксем те, ытти сойузлă тата автономлă республикăсенчи çамрăксем пекех, тăван çĕршыва тăшманĕсенчен сыхлама йаланех хатĕр. Йапони вoйенщинни Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи совет чиккине пăсма пăхни, пирĕн республикри ĕççамрăкĕсене хыттăн тарăхтарчĕ. Призыва кĕме çул çитмен çамрăксемех хăйсене Хĕрлĕ Çар ретне илме ыйтса, Чăваш АССР Çар Комиссариатне заявленисем параççĕ. Чăнкассинчи (Куславкка р.) Иван Михайлăв йулташ 1918 мĕш çулта çуралнă, унăн кăçал призыва пулмала мар. Йапони вoйенщинни Инçет-Хĕвелтухăçĕнче совет чиккине пăсма хăтланнине пĕлнĕ хыççăн, вăл Чăваш АССР Çар Комиссариатне çакăн пек çыру çырнă:

„Йапони вoйенщинни пирĕн Совет çĕршывĕн чикки çине тапăнма хăтланни, мана пĕтĕм чĕререн тарăхтарчĕ. Манăн хам ирĕкпе Хĕрлĕ Çар ретне тăрса, хамăн алсене хĕçпăшал тытса тăван çĕршыва сыхлас килет. Йĕрке тăрăх манăн çитес çулта призыва кĕмеле, çапла пулсан та, кăçалах мана Хĕрлĕ Çара илме ыйтатăп".

Михайлăв йулташ заявленире общĕствăлă ĕçсенче мĕнле ĕçленисене кăтартса парать. Вăл йалта комсомолпа Осоавиахим пуçламĕш организацисен организатăрĕ.

Михайлăв йулташ пекех 1918-19 çулсенче çуралнă Аркадий Шмид (Нăрăтчакки йалĕ, Сĕнтĕрвăрри р.), Валентин Малышкин (Кĕнер йалĕ, Куславкка р.), Алексей Александрăв (Хĕрлĕ Чутай комсомол райкомĕ) т. ыт. йулташсенчен те заявленисем килнĕ. Кун пек заявленисем кашни кун 10-15-шер килсе тăраççĕ.

В. Цыпленкăв.

Хĕрлĕ Çар ретне тăма хатĕр

Çĕнтăбĕрĕн 1-мĕшĕнче „Хĕрлĕ Çар ретне кайма призыва кĕретĕп. Ку куна пысăк хавасланса кĕтетпĕр. Тăван çĕршыва сыхласси—вăл чи хисеплĕ те чыслă ĕç. Хăллехи вăхăтра призыв умĕнхи вĕренÿре лайăх вĕренсе тухрăм. ГТО, ГСО, ПВХО тата „Ворошиловский стрелок" значок нормисене питĕм. Халĕ епĕ пур йенчен те Хĕрлĕ Çар ретне тăма хатĕр. А. Григорйĕв.

Çĕрпÿ р., „Ĕмĕр" колхоз.

Францири политикăлă кризис

Августăн 21-мĕшĕнче Франци правительствин пуçлăхĕ Даладйе радио тăрăх сăмах каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл—тĕнчери лару-тăру тĕреклĕ мар тăнă чухне уйрăмах оборона валли ĕçлекен предприйатисенче ернере 40 сехетрен ытларах ĕçлеме кирли çинчен каланă. Херех сехетлĕ ĕç ерни çинчен калакан саккуна, халăх фрончĕн питĕ пысăк çитĕнĕвĕсенчен пĕри пулса тăраканскерне, çĕнĕрен пăхса тухасси пирки каланă. Даладйе заявленийĕ рабочи класа тата Францири мĕн пур халăха хытă тарăхтарса йанă. Даладйе ыйтăвĕ çĕршывăн хуçалăх йаварлăхĕсенчен тата Франциин нацилĕ оборонин ыйтăвĕсенчен тухса тăмасси уççăнах паллă.

Çакă вăл çакăн пек фактсенчен уççăн курăнать. Çапла, предприйати хуçисем 40 сехетлĕ ĕç ернине пĕтерме ыйтса, ĕç вăйĕ çителекçĕрри çине кăтартаççĕ. Çав вăхăтрах йулашки ернесенче кăна хапрăксемпе савăтсенчен темиçе вунă пин рабочине ĕçрен кăларса йанă. Францире ĕççер пурăнакансем 40 пин çынна çитеççĕ. Промышлĕннăçăн питĕ нумай отрăçлĕсенче рабочисем ернере 30—35 сехетрен ытлах мар ĕçлеççĕ. Халăх фронтне хирĕç килешменлĕх тăвас тесе, предприйати хуçисем терлер и предприйатисен, вăл шутрах оборона валли ĕçлекен предприйатисен ĕçне тенуриех чарса пыраççĕ.

Франци коммунисла партин хаçачĕ „Юманите" çакăн çинчен акă мĕн çырать. Нацилĕ оборона валли ĕçлекен Пуго хулинчи литейнăй савăт хăйĕн рабочийĕсене ернере 22 сехет ĕçлемелĕх ĕç панă. Парижри „Класс" йатлă металлурги савăтĕнче мĕнпур рабочисенчен виççĕмĕш пайне ытла ĕçрен кăларнă, йулнисем вара ернере 20 сехет анчах ĕçлеççĕ. Рубе хулинчи пир авăр хапрăксен хуçисем,—вĕсен продукцинчен 90 проценчĕ çар валли кайать,—хăйсен рабочисем хушшинчи конфликта пĕтерме 1937 çулти декабер уйăхĕнчен вара йурийех чăрмавлаççĕ, çавна пула çак хапрăксем виçĕ мĕлйун метра йахăн пир-авăр парайман пулнă.

Францири рабочи клас çĕнтерĕвĕсен хуралĕнче тăракан компарти чĕннипе, Францири вуншар тата çĕршер пин пролетарисем 40 сехетлĕ ĕç ерни çинчен калакан саккуна хÿтĕлеме хатĕррине демонстрацилесе панă. Францири компарти реакци маневрисене тăрашыв çине кăларнă. Франци правительствин пуçлăхе çав реакци шухăш е паларса тăнă.

Франци коммунисла парти Тĕпкомĕн секретарĕ Жак Дюкло чăнчан нацилĕ оборона пысăк промышлĕнниксем производствăна сăтăр тумалли майсене чарса лартма ыйтни çине кăтартса панă. Нацилĕ оборонă—франкпа спекуляци тăвассине хирĕç татăклă ĕçсем тума ыйтать, вăл государствă учрежденисене тата çара фашисла елементсенчен тасатма ыйтать. Республикăна хÿтĕлесси—Францири фашиссен пуçлăхĕсене Дорриова, де ла Рока тата ыттисене те тĕрмене лартма ыйтать. Нацилĕ оборонă—халăх фрончĕн пĕрлĕхне çирĕплетме ыйтать.

Даладйе сăмахĕ çĕршывăн тулти тата шалти лару-тăрăвĕшĕн питĕ хăрушă пулнипе, Францири коммунисла парти Тĕпкомĕн Политбÿровĕ августăн 25-мĕшĕнче Францири халăх патне йатарласа чĕнсе каланине пичетленĕ. Çав чĕнсе каланинче Политбÿро социалиссене, радикалсене, профсойузсене пĕрлешнĕ ĕççыннисене, коммунистсене тата мĕн пур демократсене социаллă реформăна хирĕçле акăсене сирме нихăçанхинчен вăйлă пĕрлешме чĕнни, Политбÿро—40 сехетлĕ ĕç ерни тăвакан саккуна тĕкĕнсе пăсма йулмаллине чаплă çирĕплетес шутпа парламĕнт пухма ыйтнă Политбÿро çакна тума ыйтать: фашисла заговорщиксем правительствă пуçлăхне граждан вăрçи пуçарса йама тата конституцине хирĕçле ĕçсем тума тĕрлĕрен хĕтĕртнисене питĕ хытă сивлемеле, вăхăç пĕр çын аллинче пуласси тума тĕрлĕрен хăтланнисене сивлемеле, ватă ĕççыннисен, ĕççĕр йулнисен, служащисен тата хресченсен массисен ыйтăвĕсене пурнăçа кертессишĕн тăмала.

Малала Политбÿро—социаллă саккунсем çине атакăсем организацилекен тата Францире усă курас капитала йут çĕршывсене йаракан трестсен хăтланăвĕсене тăрăшыв çине кăларма ыйтать.

Политбÿрон çак решенине Франци халăхĕн сарлака массисем пысăк хавaспа йышăннă. Франци ĕççыннисем коммунисла парти пĕрлĕх фронтне тĕрекметме тата реакцилĕ буржуази атакисемпе кĕрешме чĕннине пĕтĕм вăйсемпе килĕшеççĕ. Çак факта Даладйе правительстви шута илмесĕр тăма пултараймасть.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

ВАТАМ КИТАЙРА

Йулашки икĕ кун хушшинче Йанцзы йуханшывĕ патĕнчи фронтра Китай çарĕсем активлăн вăрçни палăрать. Çав йуханшывăн çурçĕр çыранĕнче Китай çарĕсем Йапони чаçĕсене малала кайма чарса лартнă. Китай çарĕсем кунта хыттăн контрнаступлени тума пуçланă. Августăн 27-мĕшĕнче ирхине 9 сехетре йапонĕçсене Цзючжан хулинчен хĕссе кăларнă. Йапонĕçсене хĕссе пырса, Китай çарĕсем кăнтăрла иртсен икĕ сехетре Тайху хулине (Аньцинрен кăнтăр-хĕвеланăç йенчеле) йышăннă. Йапони çарĕсем, пысăк сухатусем тÿссе, Аньцин патнеле кайала чакаççĕ. Йапони çарĕсен Хуанмейре тăракан отрйадне китайĕçсем хăйсен тылĕнчен татса илнĕ.

Нанцзы йуханшывĕн кăнтăр çыранĕнче хайар çапăçусем Наньчан (Цзюцзйанран кăнтăрала) районĕнче пулса пыраççĕ. Çав районта йапонĕçсем тăватă çĕр çынлă десант антарма хăтланнă. Виçĕ сехет хушши хыттăн çапăçнă хыççăн, йапонĕçсен 200 çынна йахăн вилнĕ, вĕсен шутĕнче десант командирĕ те пур. Китай çарĕсем хĕссе пынипе йапонĕçсем кайала чакнă. Китайĕçсем тăватă пулемет тата темиçе винтовкă туртса илнĕ. Наньчан патĕнчи çапăçура йапонĕçсем чыхлантарса вĕлерекен газсемпе анлăн усă курнă. Анчах, газсем сирĕлсе кайсанах, Китай çарĕсем контрнаступлени тума пуçласа малала кайнă. Йапонĕçсем чыхлантарса вĕлерекен газсем йанипе Китай чаçĕсенче чылай бойецсем аманнă, вĕсене тыла куçарнă.

Жуйачан патĕнче хайар çапăçусем пыраççĕ. Китай çарĕсем кунта сăрт-тусем çинче çирĕпленнĕ. Хăшпĕр вырăнсене йулашки кунсенче темиçе хутчен пĕр-пĕринчен туртса илнĕ. Йапони командовани Наньчанпа Жуйачан патĕнче Китай çарĕсен флангĕнче вăрçă ĕçĕсене вăйлатнипе пĕрле вăл хай çарĕсен ĕçне чукунçул тăрăхĕнче те вăйлатса пырать.

Кунта вăрçакан Йапони çарĕсен ушкăнĕсем чукунçул тăрăх Цзюцзйанран кăнтăр йеннеле наступлени туса пыр ççĕ. Фронтăн çак участкине йапонĕçсем икĕ пин ытла салтак, 800 кавалерист, 20 танк тата артиллери те пит нумай илсе пырса тултарнă.

Аньхуей провинцинче Китай çарĕсем августăн 26-мĕшĕнче Йапони колонине малала кайма чарса лартнă. Йапони колонни Лучжоуран Луане кайма тухнă пулнă. Луанрен 20 километр çурçĕр-хĕвелтухăç йенчеле çапăçу пулса иртнĕ.

Августăн 26-мĕшĕнче Йанцзы шывĕ патĕнчи çапăçура Китай артиллерийĕ Йапонин виçĕ карапне шыва путарнă.

ÇУРÇĔР КИТАЙРА

Шаньси провинцинче Йапони çарĕсен колонни, Лиширен хĕвеланăçнеле кайма тухнăскер, çул çинче Китай çарĕсемпе тĕл пулнă. Китайĕçсем калама çук хыттăн тăнипе Йапони колонни каялла Лишине таврăннă. Китай çарĕсем, Йапони колоннине хыççăн йĕрлесе пырса, хула çывăхне çитсе тухнă, унта хаяр çапăçусем пыраççĕ. Китайĕçсем çав районра Йапони офицерне тыткăна илнĕ.

Йулашки хыпарсем тăрăх, Хебей провинцинче августăн 23-мĕшĕнче Манчен районĕнче (Баодинрен çурçĕр-хĕвеланăçнеле) Маньчжоу-Го çарĕсенчи 400 салтак, йапонĕçсене хирĕç восстани туса, Китай йенне тарса кайнă. Вĕсене Китай çарĕсен отрйачĕсене вырнаçтарнă.

Августăн 25-мĕшĕнче Китай çарĕн отрйачĕ, вырăнти халăх пулăшнипе, Кайфын çывăхĕнче (Хенань провинци) Йапони чаçĕсем çине кĕтмен çĕртен пырса атакăланă. Йапонĕçсем 30 салтак ытла вилнĕ, вĕсем Кайфын патне кайала чакнă. Августăн 26-мĕшĕнче, ирхине, Кайфын хулин хĕвеланăç енчи кăнтар йенчи хапхисем умĕнче çапăçусем пуçланса кайнă.

(ТАСС).

ХӐВАТЛӐ СТАХАНӐВЛА ЙУХӐМА АНЛӐН САРСА ПЫРАР!

Социалисӑмлӑ уйхир стаханӑвцисем

Хапрӑк-савӑтра-и, социалисӑмлӑ йалхуҫалӑхӗн йӑрансӑр уйхирӗсенче-и—пур ҫӗрте те стаханӑвла йухӑм массӑлӑ йухӑм пулса тӑчӗ. Рабочисем, колхозниксем стаханӑвла ӗҫлесе ӗҫӗн пысӑк тухӑҫлӑхне кӑтартма тӑрӑшаҫҫӗ.

Йалхуҫалӑхӗнче—трактӑриссем, комбайнерсем, жнейкӑпа ӗҫлекенсем тата фермӑра ӗҫлекенсем хушшинче стаханӑвла ӗҫлесси вӑйлӑн сарӑлса пычӗ. Кӑҫал Йелчӗк районӗнчи 52 колхозран 51 колхозра, 155 бригадӑра, 150 звенора йалхуҫалӑх ӗҫӗсене пысӑк пахалӑхпа ӗҫлессишӗн ӑмӑртса ӗҫлерӗҫ. Стаханӑвла йухӑма сарса пыни ҫӗнӗ стаханӑвӗҫсем ҫитӗнтерчӗ. „Комбайн" колхозри В. Шилӑв колхозник жнейкӑпа 6 гектар вырас вырӑнне, кашни ҫменӑрах 13-шер гектар тырӑ вырса панӑ. Ҫейалкӑпа ӗҫлекен К. Йефимӑв йулташ та кӗракинче нормӑпа 5-шер гектар акас чухне 10-шар гектар акнӑ. Ворошилӑв йачӗпе тӑракан колхозра машиновед Г. Йемелйанӑв колхозник 10 шар гектар кӗрхи тырӑ акнӑ.

„Осоавиахим" колхозра А. Захарӑв колхозник жнейкӑпа кашни ҫменӑрах 12-шер гектар тырӑ вырнӑ. Кӗлте ҫыхакансем хушшинче те стаханӑвла ӗҫлесси вӑйлӑн сарӑлса пычӗ. „Сатурн" колхозра М. Павлӑвӑ колхозницӑ кӗлте ҫыхмали нормӑна 300 процент ытларах тултарса ӗҫленӗ. Унӑн нормӑ тӑрӑх 400 кӗлте ҫыхмала пулнӑ пулсан, вӑл 1250 кӗлте таран ҫыхса пынӑ. Й. Цыганов колхозник 67 ҫӗмел туса, нормӑна 315 процент тултарнӑ. Ворошилӑв йачӗпе тӑракан колхозри А. Ивановӑ йаланах 1012 кӗлте ҫыхнӑ.

Йелчӗк районӗнче трактӑриссем, комбайнерсем ӑмӑртса ӗҫлерӗҫ. Ӑмӑртура орденоносӗц Павлӑв йулташ йертсе пыракан бригадӑ трактӑриссемпе ӗҫлемели ҫулталӑк планне августӑн 27-мӗшӗнче 127 процент тултарса малти рете тухрӗ. Павлӑв бригадинчи Карамаликӑв тата Ваҫилйӗв трактӑриссем кӗракинче трактӑр ҫейалкисемпе нормӑпа 24-шар гектар акас чухне, 40-шер гектар таран акса пычӗҫ.

И. Кушманӑв комбайнер комбайнпа 380 гектар, В. Указӑв комбайнер 328 гектар ҫинчен тырӑ пуҫтарса кӗнӗ. Вӗсен нормӑ тӑрӑх 260 шер гектар пуҫтарса кӗмеле пулнӑ.

Шӑнкӑртам районӗнчи „Кзыл—Тан" колхоз стаханӑвла йухӑма тата ӑмӑртса ӗҫлессине сарса пынипе кӑҫал районра малти рете тухма пултарчӗ. Ку колхоз августӑн 25-мӗшне кӗрхи тырӑсене акса пӗтернӗ, пур культурӑсем тӑрӑх та авӑн ҫапса пӗтерсе, государствӑна тырӑ парса татнӑ. Мустахов Шихаб тата Галиулин машиноведсем 8-шар гектар тырӑ вырса, нормӑна 200-шер процент тултарса пынӑ. Шамидтинӑвӑ колхозницӑ 1300 кӗлте таран ҫыхнӑ.

„Майак" колхозра стаханӑвла йухӑм массӑлӑ йухӑм пулса тӑнӑ. Колхозниксемпе колхозницӑсем пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхне кӑтартса пычӗҫ. Сӑмахран, Нахординӑвӑ колхозницӑ 1305 кӗлте, Сайфутдинӑвӑ—1320 кӗлте ҫыхса пынӑ. Нормӑ тӑрӑх вӗсен 400-шер кӗлте ҫыхмала пулнӑ.

„Звезда" колхозри Азизӑв Адий машиновед жнейкӑпа 13 шер гектар, Йакушӗв — 8-шар гектар вырнӑ. М. Фализӑвӑ—1260 кӗлте, М. Мустахординӑвӑ 1240 кӗлте, Изйасовӑ — 1015 кӗлте, Байсуковӑ—1015 кӗлте таран ҫыхма пултарнӑ. А. Дрожанӑв колхозникӑн нормӑпа 3 пин кӗлте капана хывмала пулнӑ пулсан, вӑл 450 пин кӗлте капана хывнӑ.

Шӑнкӑртам районӗнче кӑҫал кӑна машинӑ-трактӑрлӑ станци тунӑ. Малтанхи ҫулах комбайнерсемпе трактӑриссем тӑрӑшса ӗҫлени палӑрчӗ. Комбайнер Кокушкин йулташ кӑҫал комбайнпа 455 гектар ҫинчи тырпула пуҫтарса кӗчӗ. Вӑл пӗр ҫменӑра комбайнпа 35 гектар таран тырӑ пуҫтарса кӗнӗ.

Вӑрмар районӗнчи „Хӗрлӗ Кӗтнӗ" колхоза коммунис Д. Зыкин йертсе пырат̆. Ҫак колхоз йалхуҫалӑх ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн вӗҫлерӗ. Пахча-ҫимӗҫсем пуҫтармали тата ҫӗрулми кӑлармали ӗҫсем ҫеҫ йулнӑ. Ытти ӗҫсене пӗтӗмпех вӗҫленӗ. Ф. Хованскайа, А. Чесноковӑ, Борискина колхозницӑсем кӗлте ҫыхмали нормӑна 250—260 процент таран тултарса ӗҫленӗ.

И. Лапин комбайнер кӑҫал 290 гектар, Г. Верхунӑв, Д. Абакумӑв комбайнерсем 260-шар гектар пуҫтарса кӗнӗ.

ӲКЕРЧӖК СИНЧЕ: Йелчӗк МТС-чи комбайнер И. С. Кушманӑв йулташ. Вӑл 880 гектар ҫинчен тырпул пухса кӗнӗ, уйрӑм кунсенче 35,9 гектара ҫити вырнӑ.

Цыганов фото-ӳкерчӗкӗ.

Ӑмӑртура манӑн бригадӑ мала тухрӗ

Иртнӗ ҫуркунне пирӗн Атнашри (Шӑхасан р.) Кирӑв йачӗпе тӑракан колхоз Ушанарти Калинин йачӗпе тӑракан колхозпа социалисӑмлӑ ӑмӑрту догӑварӗ туса ҫирӗплетрӗ. Епӗ йертсе пыракан бригадӑ та иккӗмӗш бригадӑпа ӑмӑртӑва тухрӗ.

Тырпул кӑҫал вӑйлӑ пулчӗ. Ӑнса пулнӑ тырпула уйран пуҫтарса кӗме тӗплӗн хатӗрленсе тухрӑмӑр. Бригадӑри звеносене уйрӑм участкӑсем ҫирӗплетсе патӑм. Вӗсем ҫав участкӑсенчи тырпула кӗске срукрах, тӑккаламасӑр пуҫтарса кӗчӗҫ. Кунта епӗр хамӑн бригадӑри чи лайӑх ӗҫлекен стаханӑвӗҫсене кӑтартса парасшӑн. Акӑ, В. Павлӑв колхозник тырӑ вырнӑ ҫӗрте жнейкӑпа, кӗрхи тырӑсене акнӑ ҫӗрте ҫейалкӑпа ӗҫлерӗ. Вӑл жнейкӑпа ҫменӑра 8-шар гектар тырӑ вырса, ҫейалкӑпа 10—11 гектар тырӑ акса пычӗ. Колхозницӑсем те ӑмӑртура йулса пымарӗҫ. Вӗсем хӑшпӗр чухне арҫынсенчен те иртерсе ӗҫлерӗҫ. А. Илђйина тата Андрейанӑвӑ колхозницӑсем 1000-шер кӗлте ҫыхрӗҫ. А. Алексейӗв, К. Федӑрӑв колхозниксем алӑпа 0,20-шер гектар таран вырчӗҫ.

Пайан стаханӑвла йухӑм пуҫланни виҫӗ ҫул тултарчӗ. Ҫак чаплӑ та историлӗ куна епӗр йалхуҫалӑх ӗҫӗсене вӑхӑтра вӗҫленипе кӗтсе илтӗмӗр.

Йулашкинчен ҫакна каласа хӑварас пулат̆. Ушанарти Калинин йачӗпе тӑракан колхоз та тырпулсене пуҫтарса кӗрес ӗҫре начарах ӗҫлемерӗ. Ҫавах ку тӗлӗшпе пирӗн колхоз мала тухрӗ. Бригадӑсен ӑмӑртӑвӗнче манӑн бригадӑ ҫӗнтерчӗ. Социалисӑмлӑ ӑмӑрту чӑн-чӑнах пысӑк вӑй пулса тӑрат̆.

В. Степанӑвӑ.

Степанӑв ӑмӑртӑва пуҫарса пынӑ

ЙЕТӖРНЕ Кӑташри „Пионер" колхоз стаханӑвла йухӑм пуҫланни виҫӗ ҫул тултарнине кӗрхи тырӑсене ҫапса тата кӗрхи тырӑсене акса пӗтернипе, государствӑна тырӑ парса татнипе кӗтсе илчӗ.

Тырпулсене уйран пуҫтарса кӗрес, авӑн ҫапас ӗҫсенче колхозниксемпе колхозницӑсем ӑмӑртса стаханӑвла ӗҫлерӗҫ. Уйрӑмах, паллӑ стаханӑвӗц агитатӑр А. Степанӑв йулташ лайӑх ӗҫленине палӑртса хӑвармала. Вӑл тырӑ вырнӑ ҫӗрте агитатӑр пулса ӗҫленӗ, ҫав хушӑрах жнейкӑпа тырӑ вырнӑ Степанӑв йулташ колхозниксем каннӑ вӑхӑтра вӗсене хаҫат-журналсем вуласа панӑ, тӗнчери лару-тӑрусем ҫинчен ӑнлантарнӑ. Ҫавнашкалах ҫтена хаҫачӗсем кӑларнӑ. Степанӑв социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва хӑй пуҫарса пынӑ. Вӑл жнейкӑпа кашни ҫменӑра 10-шар гектар тырӑ вырнӑ.

Г. Григорйӗв.

Шупашкарти парткомсен ҫекретарӗсемпе парторгсен канашлӑвӗ

Стаханӑвла йухӑма йертсе пырасси

Августӑн 27-мӗшӗнче „Чӑваш Коммунӗ" хаҫат редакцийӗпе ПСК(б)П Шупашкар хула комитечӗ парторгсемпе партком ҫекретарӗсен канашлуне иртерчӗҫ. Канашлу пуҫламӗш парторганизацисем стаханӑвла йухӑма мӗнле йертсе пыни ҫинчен сӳтсе-йаврӗ.

Стаханӑвла йухӑм пуҫланни виҫӗ ҫул тултарнине чылай парторганизацисем паха ӗҫсемпе кӗтсе илеҫҫӗ. Шупашкарти деткомиҫҫи хапрӑкӗ стаханӑвла йухӑм пуҫланнӑ куна 1938 ҫулти производствӑ планне 100 процент тултарма пулнӑ. Кунта стаханӑвӗҫсем кунран кун ӳссе пыраҫҫӗ. Пайанхи куна хапрӑкра стаханӑвӗҫсен шучӗ 56 процент шутланат̆. Социалисӑмлӑ ӑмӑрту ӗҫне лайӑх йӗркеленӗ. Хапрӑкра цехпа цех, бригадӑпа бригадӑ ӑмӑртаҫҫӗ. Ӑмӑрту догӑварӗсене мӗнле пурнӑҫланине тӗрӗслесех тӑраҫҫӗ. Пуҫламӗш парторганизаци стаханӑвӗҫсемпе канашлусем иртерет, стаханӑвӗҫсене техникӑ ӗҫне вӗрентес ӗҫе те йӗркеленӗ. 4 стаханӑвӗҫа йертсе пыракан вырӑнсене ӗҫлеме лартнӑ, 2 стаханӑвӗҫа парти ретне, пӗр стаханӑвӗҫа сочувствуйушчисен ретне илнӗ.

Шупашкарти ҫыхӑну ҫуртӗнчи парторганизаци стаханӑвӗҫсемпе тӑтӑшах канашлусем иртерет. Кунта стаханӑвӗҫсен шкулне организациленӗ, вӗсене кружоксене хутшӑнтарнӑ тата ытти те. Ҫӗнӗ савӑт строительстви ҫумӗнчи парторганизаци те стаханӑвӗҫсене йертсе пырас тӗлӗшпе лайӑх ӗҫлет. Вӗсем 350 стаханӑвӗҫа техникӑ ӗҫне вӗрентеҫҫӗ.

Анчах пур ҫӗрте те ӗҫсем капла мар. Нумай парторганизацисем стаханӑвла йухӑма кирлӗ пек йертсе пымаҫҫӗ. Стаханӑвӗҫсене спискӑ тӑрӑх ҫеҫ пӗлеҫҫӗ, вӗсене ӗҫре, вӗренӳре пулӑшса пыма тӑрӑшни ҫук. Чылай предприйатисенче стаханӑвӗҫсене хӗллехи вӑхӑтра техникӑ ӗҫне вӗрентнӗ, ҫава тухнӑ хыҫҫӑн ку ӗҫе вӑйсӑрлатнӑ. Тирсӑран савӑтӗнче уйӑхра виҫӗ зађэти пулмала, анчах зађатисем пулмаҫҫӗ. Вӑрманпромсойузра та ҫавнашкалах.

Канашлу тата ҫакна палӑртрӗ. ПСК(б)П хула комитечӗ те ку таранчен стаханӑвла йухӑма кирлӗ пек йертсе пыман. Ку ҫитменлӗхе кӗске вӑхӑтрах тӳрлетмеле.

Канашлура тухса каланӑ парторгсемпе партком ҫекретарӗсем пур те пекех профсойуз организацисем стаханӑвла йухӑма йертсе пырассипе начар ӗҫлени ҫинчен чарӑнса тӑчӗҫ. „Стройтрест ҫумӗнчи профсойуз организаци стаханӑвла йухӑмпа йертсе пыма мар, вӗсен шутне те пӗлмест. Стаханӑвӗҫсем ҫинчен ҫведӗнисем ыйтма парткома пыраҫҫӗ," терӗ Чиганайӗв йулташ. Кирпӗч савӑтӗнчи профсойуз организаци саланса кайа пуҫланӑ. Кунта член укҫисене те апрел уйӑхӗнчепе пухман. Стаханӑвла йухӑма сарса пырас вырӑнне хӑшӗ пӗрисем ку ӗҫе чӑрмантарса пынӑ. Ирхин маҫтӑр, (халӗ ӑна ӗҫрен хӑтарнӑ) йурийех ӗҫ услови туса памасӑр, Куҫмина стаханӑвкӑн ӗҫ тухӑҫлӑхне чакарса пыма тӑрӑшнӑ. Стройтрестра ӗҫлекен стаханӑвӗц Горбунов йулташ хӗллехи вӑхӑтра ҫурт тунӑ ҫӗрте 5 пин кирпӗч хывнӑ. Халђхи вӑхӑтра 2—3 пин ҫеҫ хыват̆, мӗншӗн тесен ӑна ӗҫлеме услови туса памаҫҫӗ. Инженерлӑ-техниклӑ работниксене те стаханӑвла йухӑма начар хутшӑнтарнӑ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ чылай предприйатисем производствӑ планӗсене тултарса пыраймаҫҫӗ.

Парторганизацисемпе профсойуз организацисен задачи вӑл—стаханӑвла йухӑма куллен йертсе пырасси пулат̆. Стаханӑвӗҫсене вӗренӳре те, ӗҫре те пулӑшса пыни кирлӗ. Стаханӑвӗҫсен йышне ӳстерес май, вӗсен лайӑх ӗҫ опычӗсене сарса пырас пулат̆, вӗсем панӑ сӗнӳсене пурнӑҫа кӗртсе, производствӑ планӗсене ытлашипех тултарса пымала. Ҫакна ыйтаҫҫӗ пирӗнтен партипе правительствӑ.

Пирӗн ҫитӗнӳсем

(Зимин—деткомиҫҫи хапрӑкӗнчи парторг)

Деткомиҫҫин Шупашкарти хапрӑкӗ декомиҫҫин Сӗнтӗрвӑрринчи хапрӑкӗпе ӑмӑртса ӗҫлет. Ҫавӑн пекех хапрӑкри цехсем те пӗр-пӗрин хушшинче ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Ҫак цехсем хушшинчи ӑмӑртура кӑҫатӑ тӑвакан цех малта пырат̆ (цех начађникӗ Морушкин), вӑл ҫулталӑк планне 7 уйӑхра тултарнӑ.

Рабочисем пӗр-пӗрин хушшинче стаханӑвла ӑмӑрту догӑварӗсем тунӑ. Вӗсем илнӗ обйазательствӑсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Долгорукӑв йулташ плана 200 процент, Тарасӑв йулташ 155 процент тултараҫҫӗ. Ҫавӑн пекех Куҫмин, Шчербаткин, Федоҫейӗв тата ытти йулташсем те лайӑх ӗҫлеҫҫӗ.

Хапрӑкри рабочисем хушшинче социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса йарса ӗҫлени стаханӑвӗҫсен йышне ӳстерме пулӑшрӗ. Кӑҫалхи йанвар уйӑхӗнче стаханӑвӗҫсемпе ударниксем 23 ҫын анчах пулнӑ пулсан, август уйӑхӗ тӗлне стаханӑвӗҫсемпе ударниксен шучӗ 54 ҫынна ҫитрӗ. Ку ӗнтӗ вӑл хапрӑкра ӗҫлекенсенчен 56 процентӗ пулат̆.

Халђ епӗр стаханӑвла йухӑм виҫӗ ҫул тултарнине асӑнса, ҫак куна, ҫент̆абӗрӗн 31-мӗшне, производствӑн ҫулталӑк планне 98 процент тултарнипе кӗтсе илетпӗр.

Комсомол 20 ҫул тултарнӑ йубилейе тивӗҫлипе, производствӑра тунӑ пысӑк ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илес тесе, пуҫламӗш парторганизаципе комсомол организацийӗ пухусем туса иртернӗ. Комсомолӗҫсем хӑйсем ҫине обйазательствӑсем илчӗҫ. Илнӗ обйазательствӑсене лайӑх пурнӑҫлаҫҫӗ. Морозӑв комсомолӗц производствӑри ӗҫ нормине—206 процент, Ваҫилйӗв комсомолӗц—230 процент, Игнатйӗв, Трофимӑв йулташсем 233 процент пурнӑҫласа пыраҫҫӗ.

Кӑҫал стаханӑвӗҫсемпе ударниксене, 41 ҫынна 2.900 тенкӗлӗх премиленӗ. Стаханӑвӗҫсене цехсен начађниксем пулса ӗҫлеме куҫарнӑ. Волкӑв стаханӑвӗҫа катка-пичке тӑвакан цех начађникӗ тунӑ, Лукин стаханӑвӗҫа ҫав цех начађникӗн замеҫтителӗ пулса ӗҫлеме уйӑрнӑ.

Рабочисем хушшинче партилӗ-воспитанилӗ ӗҫе йӗркелессипе те пуҫламӗш парторганизаци чылай ҫитӗнӳсем тунӑ. Халђ агитатӑрсем (Спирин, Тарасӑв, Вишневский, Шчербаткин) йаланах калаҫусем туса иртереҫҫӗ, хаҫат-журналсем вуласа параҫҫӗ.

Стаханӑвӗҫсен пурнӑҫпа йӑла условисем кашни ҫулах лайӑхланса пыраҫҫӗ, стаханӑвӗҫсен йышӗ те ӳсет. Рабочисен халђ пулса иртнӗ пухӑвӗ ҫапла каласа хӑварчӗ:

—Пирӗн хапрӑк ҫулталӑкри производствӑ планне сакӑр уйӑхра тултарат̆. Епӗр Окт̆абӗр револђуци 21 ҫул тултарнине пысӑк ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илетпӗр.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Патӑрйел МТС-чи трактӑрсен бригадин бригадирӗ В. Ҫеверӑв й., унӑн бригади августӑн 20-мӗш тӗлне 980 гектар ӗҫлесе, ҫулталӑкри плана ытлашшипех тултарнӑ. Ҫунтармалисене 3.400 килограм перекетленӗ.

Цыганов фото-ӳкерчӗкӗ.

1918 ҫулти августӑн 30-мӗшӗнче В. И. Ленина тискеррӗн вӗлерме тӑни

20 ҫул кайала, 1918 ҫулти августӑн 30-мӗшӗнче, ес-еркӑ Каплан пӗтӗм тӗнчери рабочи класӑн генилӗ ҫулпуҫне—В. И. Ленина вӗлерме тӑнӑ. Чуна ҫӳҫентерекен ҫак тискер преступленине троцкисла-бухаринла ес-ерла бандитсем хатӗрлесе пурнӑҫа кӗртрӗ.

Халӑхӑн ҫак тискер тӑшманӗсем Окт̆абӗр револђуцин малтанхи кунӗнчех совет влаҫне сирпӗтсе антарма тӑрӑшнӑ. Провокаци туса Германипе вӑрҫассине малала тӑсас тесе, вӗсем нимӗнле средствӑсем умӗнче те чарӑнса тӑман, ҫамрӑк совет ҫӗршывӗ Германи империалисӗсен ҫарӗсене отпор пама пултарайас ҫук тесе, совет ҫӗршывне йун айне туса, ҫаратса пӗтерессн ҫине шаннӑ вӗсем.

Нимӗҫсемпе мир ҫинчен калаҫнӑ чухне Иудӑ-Троцкий провокаци туни, Бухарин тата хӑйне маскӑпа витес тӗллевпе „сулахай коммуниссем" тесе калакан унӑн бандин предательле ӗҫлени, ес-ерсен террорла актисем—ҫаксем вӗсем пурте халӑха тата социалисӑмлӑ револђуцине хирӗҫ тунӑ тӗлӗнмеле тискер загӑварӑн сыпӑкӗсем пулнӑ.

Тӑшмансем ҫӗршыва вӑрҫа тӗртсе йанӑ, ҫӗршыва вӑл вӑхӑтра мир пуринчен те ытларах кирлӗ пулнӑ. Тӗнчене икӗ лагӗре уйӑрса йанӑ Окт̆абӗрти Аслӑ Социалисӑмлӑ револђуци ҫӗршыври контрреволђуципе тата пӗтӗм тӗнчери империалисӑмпа пурпӗрех пулмали ҫапӑҫусен вӑрӑм тапхӑрне уҫса панӑ. Ҫав ҫапӑҫусене хатӗрленмеле пулнӑ. Кивӗ, пачах вӑрҫма пултарайман ҫар вырӑнне револђуци ҫарне—Рабочисемпе Хресчӗнсен Хӗрлӗ Ҫарне тумала пулнӑ. Тӑвата ҫул хушши пынӑ империалисӑмлӑ вӑрҫӑра ӗнтӗркенӗ халӑх массисене сывлӑш ҫавӑрса илме май памала пулнӑ.

Сталин йулташ: ҫав тапхӑрта парти стратегин тӗллевӗ—„вӑхӑтпа усӑ курасси, противнике пӑсса йарасси тата кайран наступленине куҫма вӑйсем пухасси" *) пулнӑ тесе кӑтартса панӑ.

Вӑйлӑн та тимлӗн кӗрешсе мир тума пултарнӑ Ленинпа Сталинӑн ҫирӗп ҫулйӗрӗ ҫамрӑк совет республикине ҫӑлса хӑварнӑ.

Тӑшмансем Окт̆абӗр револђуцине нимӗҫ аттисемпе пӑвса вӗлерме ӗмӗтленнине ҫапса хуҫнӑ.

Анчах та тӑшмансем пӑшала пуҫтарса хуман-ха, вӗсем, совет халӑхӗнчен генилӗ ҫулпуҫӗсене туртса илес шутпа, совет халӑхне ҫӗнӗрен ҫапма хатӗрленнӗ.

Рабочи класӑн тӑшманӗсем, ылханлӑ предательсем—Троцкий тата Бухарин, ӗнтӗ Брестри калаҫусем вӑхӑтӗнчех, совет правительствине сирпӗтсе антарасси ҫинчен, Ленина, Сталина тата Свердлова вӗлересси ҫинчен сулахай ес-ерсен пуҫлӑхӗсемпе калаҫса татӑлнӑ.

Ес-ерла террориссем 1918 ҫулти йанвӑр уйӑхӗнчех ӗнтӗ В. И. Ленин автомобилӗ ҫине пӑшалпа пенӗ. Мартра Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ Мускава куҫса килнӗ чухне, В. И. Ленин ларса пыракан пуйӑса тӳнтерсе йама хӑтланса пӑхнӑ.

Бухаринӗҫсем, троцкиссем, меншевиксем, ес-ерсем совет Роҫҫийне Германипе хирӗҫ вӑрҫа туртса кӗме хӑтланнисем пурте арканса кайсан, вӗсем пролетари диктатурине хирӗҫ тата ытларах ишӗлтерӳлӗ ӗҫ тума пуҫлаҫҫӗ. 1918 ҫулти ҫуллахи вӑхӑт тӗлне совет республикӗн лару-тӑрувӗ татах начарланнӑ. Ҫӗршыв хуҫалӑхӗ пысӑккӑн йухӑнса ҫитнӗ, нумай вырӑнсенче, пуринчен ытларах центрти районсенче, выҫлӑх персе ҫитнӗ. Пур ҫӗрте те тенӗ пекех кулак восстанийӗсем сике-сике тухнӑ, бандитисӑм вӑйланса пынӑ. Антантӑ шалти контрреволђуципе пӗр сойузлӑ пулса совет влаҫне ҫапма хатӗрленнӗ. Ирсӗр изменник Иудӑ-Троцкий пӗлсе тӑрсах тата вӑл килӗшӳ панипе Архангељска Англи ҫарӗ анса йулнӑ. Май уйӑхӗн вӗҫӗнче чехословаксен контрреволђуцилӗ восстанийӗ пуҫланнӑ, вӗсем Пензӑран пуҫласа Иркутска ҫитиччен пӗтӗм чукунҫул магистраљне йышӑннӑ. Англи штыкӗсем пулӑшнипе Бакура влаҫа меншевиксем хӑйсен аллине илнӗ. Троцкисла-бухаринла бандитсен ишӗлтерӳлӗ, провокацилӗ ӗҫӗпе усӑ курса, Германи ку вӑхӑт тӗлне пӗтӗм Украинӑна ҫарсемпе йышӑнма ӗлкӗрнӗ. Инҫет-Хӗвелтухӑҫӗнче Йапони десант антарса хӑварнӑ.

Совет республикӗ вутлӑ карта варрине тӑрса йулнӑ, унӑн хӑйӗн пӗтӗм вӑйне тӑшмансене отпор пама хумала пулнӑ. Ҫак йӑвӑр тапхӑрта Сталин йулташа чрезвычайлӑ полномочисемпе Царицына йанӑ, вӑл ҫӗршывӑн вӑрҫӑ тата ҫимӗҫ лару-тӑрӑвӗнче улшӑну тунӑ.

Ҫав вӑхӑтра ес-ерсем Бухаринпа тата Троцкипе пӗрле револђуцине хыҫалтан ҫапма хатӗрленнӗ. Иййулӗн 6-мӗшӗнче Германи посолне Мирбаха провокаци туса вӗлернӗ, тата „сулахай" ес-ерсен восстанийӗ пуҫланнӑ. Восстанине ҫав кунах пусарса лартнӑ, восстани тӑвакансен мӗскӗн йулашкийӗсене тытнӑ.

Иййуђ уйӑхӗнчех Иарославђре ес-ерсен контрреволђуцилӗ пӑлхавне организациленӗ. Анчах кунта та контрреволђуцине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Восстанине пусарса лартнӑ.

Мускавра „сулахай" ес-ерсен пӑлхавне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ хыҫҫӑн усал тӗпренчӗк Бухарин, Иудӑ-Троцкий тата ес-ерла ирсӗр бандитсем Ленинпа Сталина вӗлерме вӑйлӑн хатӗрленеҫҫӗ.

Револђуцине йертсе пыракансемсӗр тӑратса хӑварас, ҫапла майпа интервентсемпе шургвардейӗҫсене пирӗн ҫӗршывра ӗлӗкхи пек тепӗр хут помещикла-капиталисла чуралӑх туса хума пулӑшас тесе, халӑх тӑшманӗсем пролетариат ҫулпуҫӗсене вӗлерсе пӗтерме тӑрӑшаҫҫӗ. Ирсӗр ҫынвӗлеренсен троцкисла-бухаринла-ес-ерла банди пӗр тискер ӗҫ хыҫҫӑн теприне тӑват̆. Иййунӗн 20-мӗшӗнче вӑл бандӑ Петроградра Володарский йулташа вӗлернӗ. Августӑн 30-мӗшӗнче унӑн ирсӗр аллинчен Петроградри Чрезвычайлӑ Комиҫҫи председателӗ Урицкий йулташ вилнӗ. Ҫав кунах троцкисла-бухаринла тата ес-ерла бандитсем Мускавра В. И. Ленина вӗлерме тапӑннӑ. Пролетариатӑн аслӑ ҫулпуҫӗ, йаланхи пекех, ҫав кун рабочисен пухӑвӗсенче сӑмах тухса каланӑ, массӑсене ҫӗршыври тата тулашри контрреволђуципе кӗрешме организациленӗ тата чӗрӗ вӑй парса хавхалантарнӑ. Августӑн 30-мӗшӗнче каҫхине Владимир Илђйич Михељсон савӑтӗнчи (халђ Владимир Илђйич йачӗпе тӑракан савӑт) рабочисен пухӑвӗнче сӑмах тухса каланӑ. Ленин пухуран тухнӑ чухне ӑна рабочисем йӗри-тавра хупӑрласа илнӗ, ӑна вӗсем хӗрӳллӗн саламланӑ, ҫав самантра троцкисла-бухаринла-ес-ерла шайкӑ тискер ӗҫ тунӑ, ҫав тискер ӗҫшӗн етемлӗх нихҫан та каҫарас ҫук. Ҫынвӗлеренсем Каплан ес-еркӑн ирсӗр аллипе кӗтесрен Ленин ҫине тӑватӑ хутчен револђверпе пенӗ, револђверне наркӑмӑшлӑ пуђӑсемпе авӑрланӑ пулнӑ. Ленин йӑвӑр аманнӑ, тимӗр пек ҫирӗп сывлӑхӗ ҫеҫ ӑна ун чухне вилӗмрен ҫӑлса хӑварнӑ.

Пирӗн пӗтӗм ҫӗршыв, пирӗн пӗтӗм халӑх пӗтӗм тӗнчери пусмӑр тӳсекенсем хӑйсен тӑван, йуратнӑ Илйичӗн чӗре таппине шикленсе те шанчӑклӑн итлесе тӑнӑ.

Пӗтӗм совет халӑхӗ пӗр кӑмӑллӑ пулса ҫынвӗлеренсене хайӑррӑн айӑплама ыйтнӑ. Ленина тискеррӗн вӗлерме тапӑннине ответлесе Хӗрлӗ Ҫар тӑшмана татах та ытларах хӗсме пуҫланӑ. Ҫент̆абӗр уйӑхӗнче Симбирск хулине йышӑнса илсен, красноармейӗҫсем Ленин патне йанӑ телеграммӑра ҫапла ҫырнӑ: „Хаклӑ Илйич! Есӗр ҫуралса ӳснӗ Симбирск хулине туртса илни—вӑл сирӗн пӗр суранӑшӑн ответ пани, тепӗришӗн—Самар пулат̆". Часах Самара та йышӑнса илнӗ.

Рабочи класӑн чи йуратнӑ ҫулпуҫне, пролетарилӗ револђуцин генилӗ стратегне вӗлерме тапӑннисем—хӑйсене „сулахай коммуниссем" тесе чӗнекен ҫынсем пулнине пирӗн халӑх ун чухне пӗлмен.

20 ҫула йахӑнах иртсен тин, совета хирӗҫле „сылтӑмла-троцкисла блок" процесӗнче ҫакна палӑртса ҫирӗплетме май пулчӗ: Ленина ҫавӑн пек вӗлерме тапӑнассине организацилекенсем халӑхӑн чи усал та хайар тӑшманӗсем, фашисла шпионсем—Бухарин, Троцкий т. ыт. те пулнӑ. Ҫавсем ӗнтӗ рабочи класран, пирӗн халӑхран чи йуратнӑ аттене тата учителе В. И. Ленина туртса илесшӗн пулнӑ.

Тӑван ҫӗршывӑн ирсӗр предательсем, фашисла разведкӑсен агӗнчӗсем, пирӗн ҫӗрсене фашисла тата капиталисӑмлӑ урӑх ҫӗршывсене сутма хатӗрленнӗскерсем, маскӑсемпе витӗннӗ, хырӑмпа шунӑ, икӗпитленнӗ, улталанӑ, совет ҫӗршывне тата унӑн паттӑр халӑхне вӑрттӑн пӗтерсе хума хатӗрленнӗ. Анчах та тӑшмансем йӑнӑшрӗҫ. Пирӗн парти ӗҫҫыннисен асларан та аслӑ ҫулпуҫӗ Сталин йулташ йертсе пынипе вӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларчӗ. Партин чи лайӑх ывӑлӗсенчен пӗри, халӑх йуратакан Н. И. Йежов йертсе пыракан пирӗн пархатарлӑ совет разведки вӗсен ҫӗлен йӑвисене ҫӗмӗрсе тӑкрӗ. Халӑх тӑшманӗсем—обербандит Троцкий, усал тӗпренчӗк Бухарин тата ыттисем—совет государствине ишӗлтерес тесе хӑтланнисем пурте арканса кайрӗҫ.

Совет халӑхӗ аслӑ Сталин йертсе пынипе, пӗр ҫӗнтерӳ хыҫҫӑн тепӗр ҫӗнтерӳ туса, хӑйӗн тӑван ҫӗршывне кунсеренех телейлӗрех те хӑватлӑрах туса, хӑйулӑн малала кайат̆. Ленинӑн—Сталинӑн аслӑ партийӗ йертсе пынипе пӗтӗм совет халӑхӗ, сыхӑлӑхлӑ часовой пек, хӑй ҫӗнсе кӗрешсе илнисене хурал тӑрат̆. Тӑшмансемпе кӗрешнӗ ҫӗрте вӑл хӑйӗн револђуцилӗ сыхӑлӑхне вунӑ хут ӳстерет. Вӑл пытанса йулнӑ фашисла ҫӗленкалтасене тӑрӑ шыв ҫине кӑларса пӗрре те йулмиччен пӗр хӗрхенмесӗр вӗлерсе пӗтерет.

Халӑх тата коммунисӑм пирӗн ҫӗршывра пӗрлӗхлӗ. Вӑйа пӗрлешрӗҫ, вӑл вӑйа тӗнчере никам та ҫӗнтерме пултараймаст̆.

(ТАСС).

*) Сталин. Вопросы ленинизма. изд. X. стр. 56.

Стаханăвла йухăмăн пахалăхĕ „вăл социалисăмран коммунисăма куçма условисем хатĕрленинче пулаť“ (СТАЛИН)

ПЫСĂК ŸСĔМ

Çĕмĕрлери „Большевик“ савăтра стаханăвла йухăм 1935 çулта сарăлма тытăнчĕ. Çак вăхăтранпа стаханăвĕçсен çемйине вуншар рабочисемпе работницăсем хутшăнчĕç. Виçĕ çул кайарах савăтра ĕçлекен 541 рабочирен стаханăвĕçсем 8 çын çеç пулнă. Кăçал августăн 1-мĕшĕ тĕлне стаханăвĕçсем 266 çын шутланаççĕ. Ку савăтра йалан ĕçлекен рабочисен хисепĕнче стаханăвĕçсем 72,5 процент пулнине пĕлтерет.

Ку цифăрсем чи пирвайах стаханăвла йухăм массăлă йухăм пулса тăни çинчен каласçĕ. Рабочисем ĕç çине çĕнĕле пăхма вĕреннипе вĕсен пултарулăхĕ ÿсет. Ăна кашни рабочин ĕçĕнче курăтăн.

Стаханăвĕçсем Антонинă Йевдокимăвă тата Йелизаветă Торгашовă йулташсем вăйлă тата пысăк машинăсем патĕнче ĕçлеççĕ. Вĕсем производствăра ĕçленипе пĕрлех общĕствăлă ĕçсене активлăн хутшăнаççĕ. Йевдокимăвă йулташ—профсойузсен савăтри комитечĕн членĕ. Торгашовă йулташ—ПÇÇЛКС комитечĕн çекретарĕ. Çавнашкалах ĕçре ÿснĕ А. Иакăвлевă йулташ кулленхи нормăна 140 процент тултарса пыраť. Кунашкал стаханăвĕçсем темиçе вуншарăн шутланаççĕ. Савăтра икĕ нормă тултарса ĕçлекен рабочисен шучĕ те ÿссех пыраť. Н. Дергачов йулташ 230 процент, Устимăв йулташ 200 процент тултараççĕ т. ыт. те.

Стаханăвла ĕçлени рабочисен пурнăç условисене çĕклеме майсем туса параť. Ĕçукçи хисепĕ çултан çул ÿссе пыраť. 1934 çулта вăтамран шутласан, пĕр рабочи уйăхра 144 тенкĕ илнĕ пулсан, 1936 çулта 187,5 тенкĕ илнĕ. Кăçал рабочисен вăтам ĕçукçи хисепĕ 250 тенкĕрен те иртет. Уйрăм стаханăвĕçсем: Кистаков йулташ 550 тенкĕ, Горбунов 400 тенкĕ, Кулаков 425 тенкĕ илеççĕ.

Савăтри рабочисем тата инженерлă-техниклă работниксем лайăх çуртсенче пурăнаççĕ. Пурăнмали çуртсен хисепĕ ÿсет. 1934 çулта пĕр çын пуçне 4,1 тăваткал метр пурăнмали плошчĕт пулнă пулсан, кăçал 6 тăваткал метр шутланаť. Рабочисен ачисем йаçлĕре. Савăтăн пысăк клуб пур. Унта библиотекă, кино т. ыт. те пулаççĕ.

Анчах, калас пулаť, стаханăвла йухăма анлăн вăйлатса пырас çĕрте кăлтăксем те пулаççĕ-ха. Чылай участкăсенче стаханăвла йухăма тĕплĕн шута илсе пымали йĕркесем çук. Стаханăвĕçсем хушшинче куљтурăлă-массăлă ĕçе те тивĕçлипе йĕркелемен. Савăт руководителĕсен, партипе профсойуз организацисен çитменлĕхсене пĕтерсе, савăта йалан стаханăвла ĕçлекен тумала. Ăна тума условисем çителĕклĕ. Савăт коллективĕ пысăк хастарлăхпа ĕçлени савăта малашне тата та лайăх ĕçлеме пысăк шанчăк параť.

Иваницкий.

Стаханăвка-депутат

Ирхине колхоз хирне йе итем çине ĕçлеме тухнă чухне Каťă йалан вăрман леш йенче тĕрлĕрен сасăсем йантранине илтнĕ. Каťă пĕлнĕ: унта, нумай пулмаст пуш хир пулнă çĕрте, вакунсем йусакан пысăк савăт тунă. Анчах кайса курман-ха. Савăт тениуншăн сăмахра çеç пулнă.

Пĕррехинче, хăйĕн йулташĕпе Канаш пасарне кайсан, вĕсем савăта кĕнĕ. Илемлĕн ларакан пысăк çуртсене курса çÿренĕ, столовăйĕнче пулнă.

— Мĕн чухлĕ кантăк, пĕтĕм йал валљи çитмеле,—тĕлĕннĕ вăл.

Каťă таврала пăхнă.

Столовăй умĕнче, çапса тытнă сапур урлă çĕнĕ пысăк çуртсем çĕкленсе тăни курăннă. Унта пĕр вĕçĕмсĕр пуртă мăлатук сасси йантраса тăнă, савăнăçлă ĕç кĕвви шăранна...

— Ĕçлеме килесчĕ кунта,—хуллен сăмахлама пуçланă Каťă, йалан каймали çулпа утма тытăнсан,—тĕлĕнмеле кунта...

Вăхăт нумай иртмен, Каťă савăта ĕçлеме пынă. Ăна малтанах станочниксен курсĕнче вĕренме илнĕ. Ĕмĕт пурнăçа кĕме тытăннă...

Тепĕр виçĕ уйăхран Каťă станок çинче ĕçлеме тытăнаť.

1936 çул. Стаханăвла йухăмăн çулăмĕ халăх хуçалăхĕн пур участокĕсене те çавăрса илчĕ. Хапрăк-савăтсенче çĕнĕ нормăсем тăваççĕ. Каťă цехри станочницăсенчен пуринчен малтан çĕнĕ нормăсене çĕнсе илнĕ. Ийуљ уйăхĕнче çĕнĕ нормăна 125 процент тултарнă. Çакăнтан пуçласа Каťă хăйĕн ĕç тухăçлăхне кунсерен ÿстерсе пыма тытăннă.

Техникă екзамĕнне отличнă панă хыççăн, Каťă çумне вĕренме Хасамудинăвă йулташа çирĕплетеççĕ. Вара вăл производствăра хастарлă ĕçленипе пĕрлех, ăна вĕрентме тытăнаť. Вĕсем цеха ĕç пуçланиччен пĕр сехет малтан пынă. Сехет хушшинче Каťă мотора мĕнле ĕçлеттермели, станока мĕнле тытмали, тĕрĕслемели çинчен вĕрентнĕ. Çапла Райă та часах станок çинче ĕçлеме вĕренсе çитнĕ.

Халĕ Каťă Антонăвă станок патĕнче мĕнле ĕçленине курсан, икĕ çул çура кайарах çак станоксем çине тĕлĕнсе пăхса тăракан çын вăл пулнă тенине никам та ĕненес çук. Халĕ вăл пĕр иккĕленмесĕр ток параť, пĕр иккĕленмесĕр пĕтĕм ĕçе тăваť. Унăн тĕлсĕрлĕх çук, пур ĕççем те малтан шутласа хунă çирĕп йĕрке тăрăх пурнăçа кĕрсе пыраççĕ.

— Иекатеринă Антонăвă пирĕн савăтра стаханăвла йухăма пуçаракансенчен пĕриййĕ,—тет цех комитечĕн председателĕ Букин йулташ.—Ăна епĕр йаланах хисеплетпĕр. Ку çапла. Вăл Йемељанăвă йулташпа ăмăртса ĕçлесе, пысăк пахалăхсем кăтартса пыраť. Кăçал апрел уйăхĕнче брак тăвассине пĕтĕмпех пĕтернĕ, нормăна 250 процент тултарса ĕçлекен пулнă. Йемељанăвă йулташ та йулман. Вăл та брака пĕтернĕ, нормăна 240 процент тултарнă. Кунашкал пулни вĕсен туслăхне тата та хытăрах çирĕплетет.

Пирĕн телейлĕ çĕршывра ĕçлев мухтавлăх, паттăрлăх ĕçĕ пулса тăчĕ. Ун çинчен Иекатеринă Антонăвă йулташ стаханăвла ĕçленипе халăх умĕнче пысăк хисеплĕхе, тивĕçлĕхе, шанчăка тухни те уççăн калаcа параť. Чăваш хĕрĕ, стаханăвкă Иекатеринă Антонăвă халĕ РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ. Вăл государствă ĕçĕсене туса пыраť.

Савăтра-и, цехра-и, хулара-и—пур çĕрте те Антонăвă йул. халăх пана шанчăка пысăк тивĕçре тытаť. Пĕр кунхи нормăна икĕ сехет çурă хушшинче тултарнă,—çакăн пек парне илсе кайрĕ Антонăвă йул. РСФСР Верховнăй Совечĕн Пĕррĕмĕш Çеççине. Вăл пĕтĕм ĕççынниcен чи йуратнă çулпуçĕпе Сталинпа, партипе правителствă руководителĕсемпе пĕрле Кремĕлте пулнă. Вĕсемпе пĕрле аслă государствăн пурнăç ыйтăвĕсене сÿтсе йавнă. Мĕнле чаплă хисеп! Çак хисепе Антонăвă йулташа социалисăмла ĕçлев, стаханăвла ĕçлев панă.

Йекатеринă Антонăвă хăйĕн ĕçĕн тĕп никĕсне ĕççыннисен массипе çыхăнса ĕçлес çĕре хураť. Рабочисемпе йалан çыхăну тытаť, вĕсене кулленхи ыйтусене тăтса пама пулăшаť. Антонăвă йул. тăрăшнипе нумай рабочисене хватер тупса панă. Вăлах хула совечĕн ĕçĕнче активлăн хутшăнса ĕçлеме те ĕлкĕрет.

Пайан, стаханăвла йухăм виçĕ çул тултарнă кун, Йекатеринă Антонăвăн мĕнпе савăнмали пур. Антонăвă йул. пайан коммунисла партипе совет влаçĕ туса панă ырă пурнăç çинче пуçланнă стаханăвла йухăм ăна сталинла тапхăра тивĕçлĕ çын пулма воспитани панăшăн савăнаť.

Ласточкин.
Николайĕв.

Мухтав Сталин йулташа

Пайан чаплă стаханăвла йухăм пуçланни виçĕ çул тултараť. Çак виçĕ çул хушшинче стаханăвла йухăм пĕтĕм çĕршыва çавăрса илчĕ, ĕççыннисен кулленхи йалинче йаланлăха çирĕпленчĕ. Ăна епĕ хамăн пурнăçра та лайăх куратăп.

Стаханăвла йухăм пуçланиччен епĕ чылай çĕрте, тĕрлĕ вырăнсенче ĕçлесе курнă. Йулашкинчен, 1931 çулта Çĕмĕрлери комбината ĕçлеме килтĕм. Малтан йăвăç çуракан цехра ĕçлĕрĕм, унтан станок çине ĕçлеме куçарчĕç. Çак вăхăтра стаханăвла йухăм пуçланчĕ. Чылай рабочисем хăйсен нормисене ытлашшипех тултарса ĕçлесе, стаханăвĕç йатне илчĕç. Стаханăвкă пулас шухăш мана канăç памасчĕ. Темле, стаханăвĕçсем умĕнче ырă мар пек туйанаťчĕ. Вĕренме тытăнтăм. Ĕç выранне йĕркелерĕм. Ку мана тата хытă пулăшрĕ. Нормăна 150 процент тултарса, 354 тенкĕ ĕçлесе илекен пултăм.

1938 çулти апрелĕн 8-мĕшĕнче епĕ нормăна 557 процент тултартăм. Ку ÿсĕме тăвасси ĕç вырăнне лайăх организацилевинчен килчĕ. Ĕçре парти организаци хытă пулăшрĕ. 1938 çулхи апрелĕн 29-мĕшĕ маншăн тата та савăнăçлă кун пулчĕ. Ку кун епĕ хамăн пĕр кунхи нормăна 567 процент тултартăм. Çакăн пек çитĕнÿсене тума ирĕклĕ çĕршыври халăх кăна пултараť.

Çĕмĕрле хулинчи предприйатисенчи рабочисем тата служăщисем ийунĕн 26-мĕшĕнче мана Çĕмĕрле суйлав округĕнчен Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутатне суйларĕç. Депутата суйлани ман çине пысăк ответ хураť, мана тата ытларах ĕçлеме хушаť. Епĕ суйлавçăсем шанса панă ответлăха тÿррĕн пурнăçласа пыма тăрăшатăп. Депутата суйланăранпа рабочисем час-часах ман пата пулăшу ыйтма пыраççĕ. Епĕ вĕсенчен тĕплĕн ыйтса пĕлсе, ыйтусене çийĕнчех татса пама пулăшатăп.

Совет влаçĕ пулнăранпа епĕ çын пултăм. Пирĕн çĕршывра кашни çын чи хаклă пуйанлăх пулса тăраť.

Стаханăвла йухăмăн ырлăхĕ вăл—телейлĕ тулли пурнăç. Халĕ ман хамăн пÿрт пур. Килте вĕренме, канма, пурăнма кирлисем пурте пур. Çакнашкал лайăх пурнăçа пире коммуниссен партийĕ туса панă. Мухтав Сталин йулташа!

В. Каçйанăвă.
Комбинатри стаханăвкă, ЧАССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ.

Чи малтан—техникăна вĕренмеле

Ĕç çакăнтан пуçланчĕ: хапрăк-савăт шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, 1934 çулта мана урапа цехне ĕçлеме йачĕç. Малтанхи кунсенче пресс çинче ĕçлерĕм. Унта пĕр уйăх ĕçлесен, станочник пулса ĕçлеме куçрăм. Нормăна тултарас тесе йаланах тăрăшса ĕçлеттĕм, анчах ĕç ăнăçлăн пулмасťчĕ. Мĕншĕн апла пулнине халĕ лайăх чухлатăп. Начар ĕçлени пуринчен ытла техникăна тĕплĕн пĕлменнинчен килсе тухаť.

ŸКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Канашри вакунсем йусакан савăтра урапа цехĕнче ĕçлекен стаханăвĕç Муртазин йулташ.

1935 çулта стаханăвла йухăм пуçлансанах чылай рабочисем пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме тытăнчĕç. Вĕсене кура манăн та стаханăвĕç пулас килчĕ. Анчах стаханăвĕç пулас тенипех стаханăвĕç пулма май çук. Стаханăвĕç пулма „техникăна вĕренсе çитни кирлĕ. Çакна тавçăрса илсе, епĕ техникăна çине тăрса вĕренме тытăнтăм, техникă кружокне çÿрерĕм, станок мĕнле ĕçленине йалан сăнаса пырса, лайăхрах майсене хам ĕçре çирĕплетме тăрăшрăм. Çакăн хыççăн манăн ĕç те ăнăçлăн малала кайма пуçларĕ. Епĕ 45 урапа туса кăларас вырăнне 200—250 туса кăларакан пултăм.

Хаљхи вăхăтра тăвата йенне те савалакан станок çинче ĕçлетĕп. Станокăн техникине пĕлетĕп. Çавăнпа нормăна йаланах 150—170 процент пурнăçа кĕртсе пыратăп. Стаханăвла йухăм пуçланни виçĕ çул тултарнă тĕле хатĕрленнĕ май, хампа пĕрле ĕçлекен Ануфрийĕв йулташпа ăмăртăва тухса, нормăна 200 процентран кайа мар тултарма обйазателствă илтĕм.

Калас пулаť, пирĕн цехра стаханăвла йухăма чăрмантаракан çитменлĕхсем те пур. Акă ĕç хатĕрĕсем тăратассинех илер. Çĕççисем пĕр пек мар тата çителĕксĕр. Чылай чухне чĕрĕ таварсем çитмеççĕ, çавăн пирки простойсем пулаççĕ.

Çĕмĕрле комбинатĕнчи стаханăвĕç
Денис Толстов.

Çирĕп дисциплинă—ĕçĕн никĕсĕ

Пайан епĕ стаханăвла йухăм пуçланни виçĕ çул тултарнине уйавланипе пĕрлех, хам Шупашкарти „Красный мебельщик“ ертелре ĕçлеме тытăннăранпа виçĕ çул тултарнине паллă тăватăп. Çак виçĕ çул хушшинче епĕ квалификаци тата куљтурă тĕлĕшпе те нумай ÿсрĕм. Халĕ стаханăвĕçсен ретĕнче тăратăп. Нормăна 160 процентран кайа мар тултарса пыратăп.

Мĕн пулăшрĕ-ха мана стаханăвĕç пулма? Пуриншĕн те паллă, стаханăвĕç пулма чи малтанах ĕç йĕркине тата техникăна алла çавăрса илни кирлĕ. Анчах ку çителĕксĕр. Ĕçе малтанах шутласа тунă план тăрăх туса пымасан, ĕç хатĕрĕсене тата инструментсене тирпейлĕ пăхса усрамасан, техникăна вĕреннипех ÿсĕмсем тума май çук. Апла тума чи пирвайах çирĕп дисциплинăлă пулни кирлĕ. Дисциплинă вăл ĕç çине социалисăмлă пăхма вĕрентет, ĕçри çитменлĕхсене вăхăтра палăртса пыма вĕрентет. Кăна епĕ хамăн ĕçре те лайăх сăнарăм.

Ертелте ĕçлеме тытăннăранпа епĕ нихăçан та прогул туман. Ĕçе кулленех вăхăтра пырса, пĕтĕм ĕç вăхăтĕнче туллин ĕçлессишĕн тăрăшрăм. Ку мана хăвăрттăн малала кайма май пачĕ. Вара епĕ стаханăвĕç пултăм. Çапла манăн стаханăвла ĕçĕн тĕп никĕсĕнче çирĕп дисциплинă тăраť.

Стаханăвла йухăма малашне массăлă йухăм туса хума чи пирвайах рабочисем тата инженерлă-техниклă работниксем хушшинче çирĕп дисциплинă туни кирлĕ. Пирĕн ĕçре ăнланулă дисциплинă пулмала. Вăл дисциплинă простойсене тата механисăмсемпе усă курас ĕçри çитменлĕхсене хăвăрттăн пĕтерет. Производствăра куљтурăлăх тума пулăшаť. Çакна пирĕн йалан асра тытса, дисциплинăна çирĕплетсех пымала тăвас пулаť.

П. И. Почичин.

Стаханăвла йухăм виçĕ çул тултарчĕ

Н. Г. МОСКАТĂВ
Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн çекретарĕ

Пайан пирĕн çĕршыври рабочи клас стаханăвла йухăмăн виçĕ çул хушшинчи ĕçĕсен итогĕсене тăваť, вăл йухăм социалисăм строителствин историнче мухтавлă çĕнĕ страницă уçса хучĕ.

Стаханăвла йухăм иртнĕ виçĕ çул хушшинче хăйĕн вихçан иксĕлми вăйне пĕтĕм тĕнче умĕнче уççăн кăтартса пачĕ. Çак йухăм пуçланиччен, сăмахран, 1934 çулта промышлĕннăçри рабочисен ĕç тухăçлăхĕ 10,7 процент ÿснĕ пулнă. Ку цифăрсем капиталисăмлă çĕршывсенчи ĕç тухăçлăхĕн ÿсĕм хăвăртлăхĕсенчен нумай çÿлерех тăнă. Стаханăвла йухăм вăл хăвăртлăхсене те кайа хăварчĕ. 1935 çулта, пирĕн промышлĕннăçра стаханăвĕçсем пĕрремĕш шутланнă чухнех, Совет рабочин ĕç тухăçлăхĕ 15,8 процент çĕкленнĕ. 1936 çулта, стаханăвла йухăм массăлă, пĕтĕм халăхсен йухăмĕ пулса тăрсан, ССР Сойузĕнчи шултра промышлĕннăçри рабочисен ĕç тухăçлăхĕ вăтамран 21 процент тата стаханăвла йухăм çуралнă промышлĕннăçра 26 процента çити ÿснĕ.

1937 çулта пирĕн социалисăмлă çĕршыв çĕнĕ пысăк çĕнтерÿсем турĕ. Ку çулта пĕтĕм халăх хуçалăхĕнче сталинла иккĕмĕш пилĕкçуллăх плавне тултарса çитерчĕ.

Капиталисăм вĕçĕ-хĕррисĕр кайала кайнă вăхăтра социалисăмла çĕршыв çĕнтерÿлĕн малала кайаť. Совет Сойузĕн промышлĕннăç продукци хисепĕ 1937 çулта 1929 çултинчен 430 процент пысăкрах шутланаť. Капиталисăмла çĕршывсенче çав хушăра промышлĕннăç продукцийĕ пачăх та ÿсмен, 1938 çулта, çĕнĕ кризис вăйланнине пула, кайала кайма пуçланă. Пирĕн çĕршыв ленинла-сталинла заданине: техникăпа економикă тĕлĕшĕнчен малта тăракан капиталисăмлă çĕршывсене хуса çитсе иртсе кайассине хăвăрттăн пурнăçа кĕртсе пынине кăтартса пама урăх ĕнентерÿсем кирли вара! Стаханăвла йухăм пире çав тĕллев патне çывхартаť, мĕншĕн тесен вăл çÿлĕ ĕç тухăçлăхĕн образецĕсене кăтартаť, вăл „кивĕ техникăла нормăсене çителĕксĕре кăларса çĕмĕрет, чылай хутра малта пыракан капиталисăмлă çĕршывсенчи ĕç тухăçлăхне иусса иртсе кайаť, çапла вара, хамăр çĕршыва социалисăма малала çирĕплетсе пыма, пирĕн çĕршыва чи пуйантарах çĕршыв тума ĕçре май уçса параť“ (Сталин).

Стаханăвĕçсем кивĕ нормăсене тата техникă çине кивĕле пăхассине çĕмĕрсе тăкса, пирĕн социалисăмлă промышлĕннăçăн пысăк резервисене уçса параççĕ. Нормăна 7000—9000 процент тултарнă ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн депутачĕ И. Гудăв пек чаплă стаханăвĕçсем вĕсем—çĕнĕ çынсем пулнине, вĕсен ĕçĕсем коммунисăмăн тухăçлă ĕçлевĕн сăнарĕ пулса тăнине кăтартаççĕ. Ĕçе кивĕле организацилени социалисăмлă техникăпа туллин усă курма чăрмантарнă. Стаханăвĕçсем ĕçе çĕнĕле организацилерĕç. Стаханăвĕçсен чи паха йенĕ вăл—вĕçĕмсĕр творчĕствă, производствăна йалан рационализацилесе пыни пулаť. Ку пиншер изобретенисем тунипе тата рационализацилениpе çыхăнса тăраť, вăл ĕç тухăçлăхне ÿстерет.

Стаханăвла йухăм производствăра организацилĕх çуккипе, йĕркесĕрлĕхпе, тасамарлăхпа тата цехсенчи тирпейсĕрлĕхпе кĕрешет. Стаханăвĕçсем — производствăри куљтурсăрлăхăн тăшманĕсем. Вĕсем производствăн пур процесĕсенче те çирĕп йеркелĕх тума ыйтаççĕ. Стаханăвĕçсем технологи процесне улăштараççĕ, производствă куљтурине малала çĕклĕççе, хăйсен практикла тÿрлетÿвĕсене техникăна тата ăслăлăха параççĕ. Вĕсем—пирĕн строителствăн новатăрĕсем. Вĕсем техникăра тата ăслăлăхра паллă вырăн йышăннине Сталин йулташ Кремĕлре аслă шкулсен работникĕсене йышăннă чухне 1938 çулти майăн 17-мĕшĕнче каланă сăмахĕнче чаплăн та ĕненмеле хакласа пачĕ.

„Тата çапла та пулаť, — хăш чухне ăслăлăхпа техникăн çĕнĕ çулĕсене ăслăлăхра пуриншĕн те паллă пулса тăракан çынсем мар, ăслăлăх тĕнчинче пачах паллă мар çынсем, ахаљ çынсем, практиксем, ĕçри новатăрсем хываççĕ. Кунта сĕтел хушшинче Стаханăвпа Папанин йулташсем лараççĕ. Ăслăлăх тĕнчине паллă мар çынсем, вĕсен учонăй степĕнесем çук, вĕсем хăйсен ĕçĕн практикĕсем. Анчах Стаханăв тата стаханăвĕçсем хăйсен промышлĕннăçри практикăлă ĕçĕпе унта пулнă нормăсене, ăслăлăхпа техникăн паллă çыннисем тунăскерсене, кивелсе кайнăскерсене ÿпĕнтерсе йани, çĕнĕ нормăсене чăн-чăн ăслăлăх тата техникă хушнисемпе килĕшÿлĕ туса хуни камшăн паллă мар?“

Стаханăвĕçсем инженерлă-техниклă ĕçĕн работникĕсен пĕлĕвĕн виçи патне тимлĕн малала пыраççĕ. Вĕсен ретĕнчен талантлă руководителсем, участкăсен, цехсен тата савăтсен чаплă организатăрĕсем ÿссе çитĕнчĕç те ĕнтĕ. Йулашки çул хушшинче промышлĕннăçра, совет влаçĕпе большевиксен парти ĕçĕшĕн тăракан массăсене çĕнĕ çĕнтерÿсем тума организацилеме пултаракан вуншар пин стаханăвĕçсене йертсе пырас ĕçе куçарнă. Кусем шутне, сăмахран, чукунçул çинчи паллă çынсем Кривонос, Огнĕв, Макарăв, Ленинградри „Скороход“ хапрăкĕн директăрĕ Сметанин, Мускаври „Серп и Молот“ савăт директăрĕ стаханăвĕç Илйин тата ытти нумай пин çынсем кĕреççĕ.

Стаханăвла йухăмăн коммунисăм тăвас ĕçри чаплă та аслă пахалăхĕ çакăн пек. Ахаљтен мар халăх тăшманĕсем, троцкисла-бухаринла сăтăрçăсем тата шпионсем пĕтĕм вăйĕпе стаханăвла йухăма пĕтерсе хума тăрăшнă. Сутăнчăксем стаханăвĕçсем çинчен елекленĕ, стаханăвĕçсен ретне пăсма пиккеннĕ пулнă, стаханăвĕçсене вĕлернĕ. Анчах та парти пĕтĕм халăх пулăшнипе стаханăвĕçсене тăшмансем çĕмĕрсе тăкассинчен сыхларĕ. Тăшмансен ирсĕр йăвине уçса палăртса, çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

„Пайанхи кун стаханăвĕçсем сахал-ха, анчах вĕсем ыран вунă хут нумайрах пулассиpermalink пирки кам иккĕленме пултарĕ“,—тенĕ Сталин йулташ 1935 çулта стаханăвĕçсен Пĕтĕм Сойузри пĕрремĕш канашлăвĕнче. Виçĕ çул хушшинче стаханăвла йухăмăн çулăмĕ пĕтĕм çĕршыва, промышлĕннăçăн тата йалхуçалăхĕн пур отрăçлисене те çавăрса илчĕ. Пĕрерĕн шутланакан стаханăвĕçсенчен епĕр стаханăвла ĕçлекен бригадăсем, цехсем йе тата предприйатисем çине те куçатпăр.

Большевиксен партийĕ, унăн Тĕп Комитечĕ пур вăхăтсенче те çĕнтерÿсен тĕп условийĕ пулса тăракан стаханăвла йухăма массăлă йухăм тăвассишĕн тăрăшаť. ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ хăйĕн Мускав тата Мускав облăçĕнчи хапрăк-савăтсенчи стаханăвĕçсем чĕнсе каланă пирки йышăннă постановленинче çапла çырнă: „... Стаханăвла йухăмăн пур ернисемпе уйăхĕсем те стаханăвла йухăмăн чи пĕчĕк пайне çеç çавăрса илекен рекордсменсене çеç мар, пур стаханăвĕçсене те тивмеле, ерне йе уйăхлăх вăхăтĕнче стаханăвĕçсен ретне сарассине чи кирлĕ задачăсенчен пĕри тесе шутламала...“ Ку кăтартăва питех те вăхăтра панă, мĕншĕн тесен уйрăм стаханăвла рекордсем хыççăн кайни стаханăвла йухăмшăн пысăк хурушлăх пулса тăнă. Паллах, хăйсем тĕллĕн илсен рекордсене ырламала; вĕсем пирĕн социалисăмлă промышлĕннăçăн тата уйăм çыннисен мĕнле иксĕлми резервисем пуррине кăтартса параççĕ. Анчах çитменлĕх хăшпĕр хуçайствĕнниксем, производствă командирĕсем, профсойуз организацисем рекордсменсем валљи условисем тума тăрăшса, ытти стаханăвĕçсем тата рабочисен пĕтĕм масси çинчен манса кайнă. Ку паллах, стаханăвла йухăма массăлăн çĕклесе пыма чăрмантараť.

Стаханăвла ĕçлесси çине массăлăн куçмала—акă мĕн кирлĕ. Стаханăвла ĕç меслечĕсене сарнă çĕрте стаханăвĕçсем йулса пыракансене пулăшни пысăк вырăн йышăнаť. Стаханăвĕçсем производствăлă канашлусенче тунă докладсем, стаханăвла шкулсем, стаханăвĕçсем пĕччен тата рабочисен ушкăнĕсене шефа илни,—çакă ĕнтĕ социалисăмла ĕçĕн пиншер маçтăрĕсене хатĕрлет.

Стаханăвла йухăм кунсерен ÿссе пыраť. Йăвăр машиностроени промышлĕннăç предприйатисенчи рабочисен шутĕнче 1935 çулти декабĕр уйăхĕнче стаханăвĕçсем 14,5 процент пулнă пулсан, 1936 çулти декабĕр уйăхĕнче 29 процент, кăçалхи çул пуçламĕшĕнче 35 процент пулнă. Халĕ кантăрти хура металлурги предприйатийĕсенчи рабочисен хисепĕнче стаханăвĕçсем 40,8 процент тата йалхуçалăх машинĕсем тăвакан рабочисен сойузĕ тăрăх 42 процент, електростанцисенчи рабочисен сойузĕ тăрăх 42 процент шутланаť. Çитес вăхăтрах (цехсем, участкăсем çинчен каламасăр) стаханăвла ĕçлеме шанчăк тытакан предприйатисем те пур. Мускаври прожектăрсем тăвакан савăт коллективĕн хисепĕнче стаханăвĕçсем 85 процент шутланаççĕ. Чукунçул çинче стаханăвла-кривоносăвла йухăм пуçаракан, ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн депутачĕ П. Кривонос йертсе пынă Славйанскăри депо пĕтĕмпе тенĕ пекех стаханăвла ĕçлет. Кунашкал тĕслĕхсем нумай илсе кăтартма пулаť. Вĕсем пĕрремĕнех кашни предприйати чăнчăн массăлă стаханăвла ĕçлесси çине куçма пултарни çинчен калаççĕ.

(Малали 4-мĕш страницăра)

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

(Парижрен ТАСС пĕлтернисем тăрăх)

Хĕвелтухăçри фронт

Гавас агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 26-мĕшĕнче пăлхавçăсем Гандесăран çурçĕр-хĕвелтухăç йенчи районра Партида де Фогуанас сарт массивĕ айенче республика позицийĕсем çине тăвата хутчен хайар атака тунă. Вăл атакăсене республика çарĕсем сирсе пăрахнă. Гандесă районĕнче Сант-Меделен сарт массивĕнчен хĕвеланăçнелле пăлхавçăсем хăйсем валли çул уçма хăтланса пăхнă. Ун пек хăтлании малтанхи пекех ăнăçсăр пулнă.

Ебро йуханшывĕнчен çурçĕр йенчи секторта пăлхавçăсем Тремп районĕнче Ноґейе йуханшывăн сылтăм çыранĕнче вырнаçнă республика позицийĕсене хирĕç атака тунă. Вăл атакăна республиканецсем сирсе пăрахнă.

Испанин оборонă министерстви августăн 27-мĕшĕнче пĕлтернĕ тăрăх, Пиедрас де Аоло патĕнчи позици çине пăлхавçăсемпе интервентсем тунă атакăна республика çарĕсем ăнăçлă сирсе пăрахнă.

Ебро йуханшывĕ тавралĕнче республика çарĕсем пăлхавçăсене халĕ те тимлĕ отпор параççĕ. Пăлхавçăсем августăн 27-мĕшĕнче Сиерра Алихăра атакă тусан вĕсен йăвăр çухатусем пулнă.

Центрти фронт

Испанин оборонă министерствин официаллă сводки тăрăх, фронтăн Естремадура участкинче республика çарĕсем Сухар йуханшывĕнчен кăнтăр йенчи районра халĕ те наступленисем тăваççĕ. Республика чăсĕсем ăнăçлă çапăçна хыççăн Сиерра дел Торосона (Кабеса дел Буейран çурçĕр-хĕвелтухăçнелле) тытса илнĕ, тата çапăçупах наступлени тăваççĕ.

Республиканецсем тыткăна нумай илнĕ, вĕсен шутĕнче пĕр офицер. Çавнашкалах вăрçă хатĕрĕсем нумай тытса илнĕ.

Ытти фронтсенче лару-тăрусем улшăнмасăрах тăраççĕ.

„Хозе Луис Диес" истребителĕ командин паттăрлăхĕ

Еспань агентстви республикăн „Хозе Луис Диес" йатлă истребителĕпе фашисла пăлхавçăсен карапĕсем хушшинче Гибралтар проливĕнче пулнă çапăçу çинчен тĕплĕн пĕлтерет.

Йусама Францине илсе кайнă „Хозе Луис Диес" карап республика флочĕн ытти вăйĕсем çумне пĕрлешме приказ илнĕ. Августăн 27-мĕшĕнче шурăмпуç килнĕ чухне вăл Гибралтар проливĕнчен тухса Гибралтар портне çитнĕ. Çакăн чухне пăлхавçăсем, хăйсен мĕн пур тинĕс вăйĕсене мобилизацилесе, вĕсене Гибралтар проливне кĕнĕ тата унтан тухнă вырăнсене пырса лартнă.

Мĕн пур хăрушлăхсене шута илмесĕр, „Хозе Луис Диес", ăна Гибралтар проливĕн хĕвелтухăç пайĕнче кĕтсе тăнă пăлхавçăсен карапĕсен сыхăлăхне улталаса республикă флочĕ йенне ишсе кайнă. Пролив варринче çеç вăл пăлхавçăсен çĕнĕ карапĕсемпе тĕл пулнă, вĕсем ун çулне пӳлсе тăнă. Анчах та „Хозе Луис Диес" çав карапсемпе çапăçса вĕсене парăнмасăр малалла хĕвелтухăç йенне ишсе кайнă. Кунта республика истребителĕ пăлхавçăсен „Канариас" крейсерĕпе, фашиссен виçĕ истребителĕпе тата икĕ миноносецпа пулнă çапăçура çĕнĕ çĕнтерӳ тунă. „Канариас" карап çинчен „Хозе Луис Диес" çине артиллерирен залппа персе республика истребителне сийен тунă. Апла пулин те вăл тăшман карапĕсен линине çĕмĕрсе кĕнĕ.

Çакна палăртни интереслă: фашисла пăлхавçăсен карапĕсемпе Германи офицерĕсем командăват тунă.

(ТАСС).

Вырăнти промышленнăç тата промкоопераци работникĕсен ПСК(б)П Мускав комитетĕнчи канашлăвĕ

Августăн 27-мĕшĕнче ПСК(б)П Мускав Комитетĕнче вырăнти промышленнăç, хулари тата облаçри çăмăл промышленнăç, промкоопераци работникĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлăва вырăнти промышленнăç предприйатисен директăрĕсем, промертелсен председателĕсем, цехсен начальникĕсем, вырăнти тата çăмăл промышленнăç управленисен работникĕсем мĕн пурĕ 600 çын ытла пухăннă.

Канашлу комиççи докладне итленĕ, вăл комиççи ПСК(б)П Мускав комитечĕпе Мускав хула комитечĕн бӳровĕ хушнипе çирĕм кун хушшинче Мускав хулинчипе облаçри вырăнти промышленнăçăн тата промкооперацин куллен кирлĕ таварсене туса кăларас ĕçе сарса йама май пуррине тĕпчесе тухнă.

Комиççи доклачĕ тăрăх пренисем пуçланнă. Пренисенче 25 йулташ тухса каласнă. Канашлура тухса каласакансем хайсем куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине пысăклатас йенĕпе тунă ĕçсем çинчен тата хушса панă программăна пурнăçа кертни çинчен каланă.

Канашлу хупăнас умĕн ПСК(б)П Мускав комитечĕпе Мускав хула комитечĕн çекретарĕ Угарăв йулташ сăмах тухса каланă.

Августăн 28-мĕшĕнче ПСК(б)П Мускав комитечĕ Мускав хулипе облаçри вырăнти тата çăмăл промышленнăç тата промкоопераци предприйатисен çулталăк пĕтиччен куллен кирлĕ таварсене туса кăларас тĕлĕшпе хушса панă плана 150 мĕлйун та 400 пин тенкĕлĕх çирĕплетнĕ.

(ТАСС).

Стаханăвла йухăм виçĕ çул тултарчĕ

(Й У Л А Ш К И)

Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕ тата профсойузсен тĕп комитечĕсем пуçарнипе йулашки уйăхсенче отраçлĕсемпе сывăтсем хушшинче ăмăрту анлăн сарăлса пырат. Чылай предприйатисем пысăк ӳсĕмсем турĕç те ĕнтĕ. Донбасри паллă стаханăвец Гвоздырьков йертсе пыракан Кирăв йачĕпе таракан 22-б участкă чаплă ĕçлет. Ӳсĕмсем тăвассин никĕсĕ—ĕçе çирĕп йĕркеленинче, график тăрăх ĕçлесси çирĕп саккун пулса тăнинче. Участкăра йулса пыракансем çук, пурте нормăна 120 процент ытла тултараççĕ. Донбасра çавнашкал участкăсем тата шахтăсем нумай. Ăмăртура стаханăвецсем, ĕçлевĕн чаплă маçтăрĕсем çуралаççĕ.

Донбасра халĕ „полугодовик" тата „годовик" тенĕ сăмахсем йăлана кĕрсе çирĕпленнĕ,—çак йатпа унта çулталăк йе çурçулти плана срукчен тултаракан стаханăвецсене чĕнеççĕ. Сăмахран, „Юный Коммунар" шахтăри забойщик И. Грищенко апрелĕн 18-мĕшĕ тĕлне çулталăкри плана тултарнă.

Пирĕн çĕршывра техникăна малалла йаракан, ĕçлев çине коммунисăмла пăхмалли тĕслĕхсене кăтартакан çĕнĕ стаханăвецсем çитĕнмен промышленнăç отраçлисем çук. Шывçул транспăрчĕ çинче чаплă механизатăр Блидман йулташ, металлургинче—доменщик Иван Гридин, Уралти пăхăр промышленнăçĕнче—бригадир Баталăв палăрчĕ т. ыт. те.

Социалисăмлă ăмăртăвăн, унăн çӳллĕ формин—стаханăвла йухăмăн хумĕ уйрăмăнах сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ вăхăтĕнче, Верховнăй Советсен тата ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ вăхăтĕнче пысăккăн çĕкленчĕ. Çав çĕкленӳпе, ĕç тухăçлăхĕ ӳстерес тĕлĕшпе тунă çĕнĕ рекордсемпе халăх хăй çĕршывне тата большевиксен партине вĕçĕмсĕр йуратнине кăтартрĕ.

Колхоз тата совхоз уйхирĕсенче те стаханăвецсем ӳсеççĕ.

Стаханăвла йухăм çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ туса пырат. Анчах та государствă планне тултарман предприйатисем тата промышленнăçăн уйрăм отраçлисем те пур ха. Сăмахран, вуншар пин чаплă стаханăвецсем тата ударниксем ĕçлекен Донбас та йулса пырат. Кăна мĕнле ăнланмала-ха?

Начар ĕçлени сăлтавĕ йулса пыракан предприйатисенче йĕркелĕх çуккинче, производствăлă культурăлăх пулманнинче, унта малта пыракан çынсен пултарулăхĕпе, пуçарулăхĕпе тата социалисăмлă вăйлă техникăпа усă курма пĕлмеççĕ. Унта халĕ те ĕçкунĕн кашни минучĕпе усă курассишĕн, графикшăн, стаханăвла ĕçĕн тимне организацилессишĕн кĕрешме пĕлмеççĕ. Пур производствă командирĕсем те стаханăвла йухăма пуçарса, ăна тарăнăн та анлăн ӳссе пыма çул уçса паман-ха. Çакăнта—тĕп сăлтав.

Стаханăвла йухăмăн кунçулĕшĕн, пĕтĕм бригадăсене, цехсене тата предприйатисене стаханăвла ĕçлесси çине куçарассишĕн профсойуз организацийĕсем ответлă. Çапах каламала, массăлă-производствăлă ĕç халĕ те профсойузсен кайа йулнă ĕçĕсен хисепĕнче тăрат. Профсойузсен пур организацисем те хăйсен ĕçĕнчи тредйунионисăм йулашкисене пĕтермен-ха. Ку уйрăмăнах хлопкăран пир-авăр тĕртекен промышленнăçри рабочисен сойузĕн организацисенче туймалăх палăрат. Ку промышленнăçăн отраçли ытти отраçлĕсенчен кайа йулнă. Профсойузсен нумай организацийĕсем рабочисемпе работницăсен пултарулăхне тата пуçарулăхне большевикла организацилемен. Профсойуз организацисем стаханăвла йухăма саботаж туни çинчен калакан фактсем çине сăмаллăн пăхни те пур. Кусемпе килĕшсе тăма йурамаст.

Профсойузсен массăлă-производствăлă ĕçе социалисăмлă строительствăн халăхи тапхăрĕ ыйтнине пурнăçа кĕртмеле тумалăх çĕклемеле. Стаханăвла йухăма пĕтĕм рабочисен массине йăвăçтарасси, стаханăвецсен опытне сарасси, техникăлă вĕренĕве организацилесси,—çаксем пулаççĕ профсойузсен хисеплĕ ĕçĕсем.

Стаханăвла опыта сарасси,—стаханăвла йухăма массăлă йухăм туса хума кирлĕ тĕп услови пулса тăрат, кăна тунă чухне чи пирвайах кунта стаханăвецсен çарĕн резерви пулса таракан ударниксем çине тимлĕн пăхмала. Çавăнпа пĕрлех профсойуз организацисен производствăлă канашлусем урлă рабочи класăн рационализацилле тата изобретателлĕ творчествине çӳлерех çĕклемеле, ĕçе тата производствăна организацилессинчи стаханăвла йухăма вăйлатма чăрмантаракан кăлтăксене çирĕппĕн критиклемеле тăвас пулат.

Стаханăвла йухăмăн тăваттăмĕш çулĕ бригадăсем, цехсем тата предприйатисем пĕтĕмпех стаханăвла ĕçлесси çине массăлăн куçмалли çул, социалисăмăн çĕнĕ чаплă çĕнтерĕвĕсен çулĕ пулса тăмала.

Анри Барбӳс

(Вилнĕренпе виçĕ çул тултарнă тĕле)

Виçĕ çул кайала, 1935 çулхи августăн 30-мĕшĕнче, Мускавра французсен чаплă писателĕ, Совет Сойузĕн тусĕ Анри Барбӳс вилнĕ.

Пирĕн çĕршывăн ĕççыннисем çав ытарма çук паха çыннăн çӳллĕ те ырхан, пăртак курпунланнă пӳне питĕ лайăх астăваççĕ. Мускав ăна пĕтĕм халăх уйавĕсенче, хĕрле плошчĕдре пĕрре мар курнă. Вăл курăнмала вырăнта, тепĕр чухне, Максим Горькипе йунашар тăратчĕ. Унăн тĕксĕмрех, пĕркеленнĕ питĕнче кăмăллăн кулни палăрса тăратчĕ. Вăл пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле савăнатчĕ.

Барбӳса Мускавра кăна мар, Совет çĕршывĕн пур кĕтесĕнче те пĕлеççĕ. Метро вагонĕсенче ун патне паллă мар йашсемпе хĕрсем пырса, унăн аллине чăмăртама ирĕк ыйтнă. Ăна тӳрĕ кăмăллă коммунист, Совет Сойузĕн ĕççыннисен улшăнми тусĕ вырăнне хисеплесе йуратнă. Вăл Мускавра, тăван хулара вилчĕ, Совет Сойузĕнчи ĕççыннисем Франци ĕçхалăхĕпе пĕр кăмăллă пулса, аслă писателĕ вилнишĕн хурланчĕç.

Анри Барбӳс 1873 çулта çуралнă. Вăл Франци интеллигенчĕ, писателĕ пулса, капиталисăмлă пусмăрлăх, выçлăх тата хĕнхурсен тĕнчи çине тарăхса пăхнă. Барбӳсăн литературăлă пултарулăхĕ 1895 çулта „Макăракансем" йатлă кĕнекепе пуçланнă. Ку кĕнекери сăвăсен тĕп шухăшĕ—йывăр хурлăх. Ĕçхалăхĕ капиталисăм пусмăрлăхĕнче асапланса пурăн и писателе тарахтарнă, хурлантарнă.

Малтанхи кĕнеке ĕçхалăхне кĕрешĕве чĕнмест, унăн нушалăхне палăртса куççуль витĕр йурлани çеç пулса тăрат. Барбӳс Франции классикла прозине лайăх вĕренсе çитнĕ май, увăн чапĕ те хăвăрт ӳссе пырат. Критика та ăна часах асăрхат. Писателĕн пурнăçа тĕрĕс сутатса парасси пуринчен ытла 1903 çулта çырнă „Ыйткалакансем" романран пуçланат. Унта вăл пурнăçа тĕрĕс те уççăн сăнласа парат.

Анри Барбӳсăн револуцилĕ кăмăлĕ империалисăм вăрçинче ӳсе хăватлавать. Тĕнче вăрçине питлесе çырнă „Вутра" роман ăна пĕтĕм тĕнче умĕнче чапа кăларат. Ку вăхăтра писатĕл çынсен хурлăхне кăна мар, çынна мĕскер хурлантарнине те туйса илет.

Барбӳсăн „Вутра" романĕ пур çĕршывсенче те империалисăм вăрçине хирĕç револуцилĕ протест ӳссе пынине палăртат. Çакăн хыççăн вара вăрçа хирĕç, империалисăмла буржуазине хирĕç, фашисăма хирĕç кĕрешесси—Барбӳсăн пĕртен пĕр ĕçĕ пулса тăрат.

Анри Барбӳсăн „Сталин" йатлă кĕнеки—аслă писателĕн йулашки ĕçĕ. Барбӳс вăл кĕнекене поетла пысăк хавхаланупа çырнă. Вăл етемлĕх валли çĕр чăмăрĕн пур кĕтесĕсенче те пысăк йуратупа асăнакан çыннăн портретне çырса хăварасшăн пулнă. Анри Барбӳс—пысăк писатĕл кăна мар, вăл тата аслă револуционер. Вăл пĕтĕм етемлĕхе пусмăртан хăтарасшăн кĕрешнĕ. Фашисăма хирĕç, вăрçа тата халăхсем пусмăрта пурăнассине хирĕç, çавăнпа пĕрлех миршĕн, етемлĕхе ирĕклĕхе кăларассишĕн, коммунисăмшăн хирӳлĕ кĕрешӳ пыракан вырăнсенче пур çĕрте те Анри Барбӳсăн йатне йаланах ăшă кăмăлпа асăнса пурăнĕç, унăн вут-кăварлă чĕлхепе çырнă, револуцилĕ паттăрлăхпа тулнă кĕнекисене вуласа çĕнтерӳ тăвас кăмăлпа çунатланĕç.

Канаш—Шупашкар чукунçул строителстви

Шупашкар районĕ ăмăртăва тухма чĕнет

КӲКЕÇ. (Хамăр корр.). Августăн 27-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи йалсовет тата колхоз председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура Вавилкин йулташ хальхи вăхăтра чукунçул строителстви мĕнле пыни çинчен каласа пачĕ.

Строителствăра чи ответлă ĕçсем йулнă. Станцăсемпе разйессенче çуртсем, складсем тумала. Лини çине сарма 50 пин кубла метр хăйăр турттарса кăлармала т. ыт. те. Строителствă ĕçне халиччен 16 мĕлйун тенкĕ укçа хывнă. Чукунçула ĕçе кĕртмеле тума тата 5 мĕлйун тĕнкĕлĕх ĕçсем тумала.

ССР Сойузĕн Çулйĕр Халăх Комиссарĕ Л. М. Каганович приказĕ тăрăх, Канаш — Шупашкар чукунçулне Октаберĕн 1-мĕшĕнче вăхăтлăх експлоатацине памала. Çак приказа пурнăçлас ĕçре çентабĕр уйăхĕ татăклă уйăх пулса тăнине палăртрĕ канашлу. Чукунçулне ĕçе йарассине пĕтĕм республикă кĕтет. Ăна ĕçе кĕртсен пирĕн республикă татах та пысăк ӳсĕмсем тума тытăнат. Анчах та Шупашкар районĕнчен чукунçул çине пайан куна çитсе те çителĕклĕ ĕç вăйĕ пыман. Çапла ĕнтĕ район хăй çине илнĕ обйазателствăна пурнăçламасăр тăрат. Пĕтĕмĕшпе илсен, çĕр ĕçĕсене пур çĕрте те пĕтернĕ. Шупашкар станцийĕ патĕнче вăл ĕçе те пĕтереймен ха. Шупашкар районĕн 15 пин кубла метр çĕр чавса турттармала. Шупашкар станци сывăхĕнче лини çине хăйăр сарас, станцинче çуртсем тăвас тата ытти ĕçсем те Шупашкар районне тивеççĕ. Çаксене пĕтĕмпех пурнăçлама районран кашни кун çураннисем 350 çын, 200 çын лашапа ĕçлесе тăмала. Çакна пурнăçа кĕртмен ха. Чылай колхозсенчен 2—3 çын ĕçе тухаççĕ те 2—3 кун ĕçлесенех пăрахса кайаççĕ. Сăмахран, августăн 24-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчен строителствăра 320 çын ĕçленĕ, августăн 26-мĕшĕнче 92 çын çеç тăрса йулнă.

Районри йединоличниксене пачах та ĕçе хутшăнтарман. Августăн 21-мĕшĕнче районĕпе те 4 йединоличник çеç ĕçленĕ, халĕ пĕр çын та ĕçлемест.

Канашлура тухса калакансем чукунçул строителствин управленийĕне те хытă критиклерĕç. Хăшпĕр колхозниксене вăхăтра ĕç укçи тӳлеменнисем пулнă.

Канашлура пулнисем чукунçула октаберĕн 1-мĕшĕ тĕлне хута йарассишĕн районри пĕтĕм ĕççыннисене тата Ишлей, Трак, Çĕрпӳ, Шăхасан, Канаш районĕсенчи ĕççыннисене чукунçул çине йышлăн тухса, Каганович йулташ приказне пурнăçлассишĕн стаханăвла ĕçлеме чĕнчĕç. Çак сĕнĕве пур колхозсемпе йалсенче те çак кунсенчех сӳтсе-йавса, чукунçулне пĕтĕмпех хута йаричченех ĕçлеме ĕç вăйĕ çителĕклĕ организацилесе тухма чĕнчĕç.

Т. Майорăв.

КАНАШЛУРА МĔН ПАЛĂРЧĔ

ИЕПРЕÇ. Учителсен канашлăвĕнче иртнĕ вĕренӳ çулĕнче Хурамалти вăтам шкул (директăрĕ Антипăв), Çĕнĕ Мăратри вăтам шкул (директăрĕ Чернов), Иепреçрипе Хумпуç-Патăрйелĕнчи туллимар вăтам шкулсем тата Çисĕмкассипе Тугайри пуçламĕш шкулсем лайăх ĕçлени палăрчĕ. Учителсенчен: Цветковă, Печникова, Михайлăв, Малицкайа тата Маркăвă отличник учителсем ĕçре пĕр прогул та туман. Вĕренӳ программине 100 процент ытлашшипех пурнăçланă. Весем вĕрентекен классенче пĕр класрах икшер çул ларакансем пĕр пăчă та çук.

Кунтах Хирти-Йавăшри (директăрĕ Розăв), Асанкассинчи (Кузнецов), Хĕшкассинчи (Шумерин), Кукшумри (Семенăв) шкулсем начар ĕçленине палăртрĕç. Вăл шкулсенче вĕренӳ программи пурнăçланман.

Вырăс чĕлхипе вĕренӳре ĕлкĕрейменнисен шучĕ 40 процентран та ытла.

Хирти Иавăш шкул директăрĕ Козăв планпа ĕçлессине хăй пăсса пынă. Шкулта кружоксем ĕçлемен. Ăмăртса ĕçлессине сӳнтерсе лартнă. Пионерсемпе вуçех ĕçлемен. Çавна пула шкулта дисциплинă йапăхланса кайнă. Вĕренĕве çӳременнисен шучĕ 40 проц. çитнĕ.

Учителсем хăйсен пĕлӳне ӳстерессипе начар ĕçленине пула, вĕрентес ĕçре йăнăш ăнлантарнисем те пулнă. Асакассинчи Кузнецов учителрен Конституципе вĕрентнĕ чух ачасем: „Крым республикине мĕншĕн Сойузлă республика туман?", те е ыйту парсан, вăл „Хура тинĕспе хупланса тăнăран" тесе ответленĕ.

Нумай шкулсенче ăмăртса ĕçлес майпа ăмăрту договăрĕсем тунă. Анчах та договăрсене тĕрĕслесе пăхман.

Канашлура тухса каласакансем райçутĕçпайĕпе Çутĕç Халăх Комиссариатне хытă критиклерĕç. Райçутĕç пайĕ вырăна тухса сахал пулăшу панă. Çак çулсенче учителсене методика йенчен пулăшу парас ĕç йапăхланнă. Методикăлă пĕрлешӳсене пĕтерсе лартнă. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче методикăлă канашлу пĕрре те пулман. Çавнашкал сийенлĕ ĕçсене пула, учителсем методика тĕлĕшĕнчен нихăçан та çителĕклĕ пулăшу илеймен, кам мĕнле пĕлнĕ, çавăн пек ĕçленĕ.

Учителсен политикăлă пĕлĕвне ӳстерес майпа парти историне вĕренмелли кружок 16, ленинисăма вĕренмелли кружок 3 организациленĕ пулнă. Хурамалти, Х. Патăрйелĕнчи, Йепреçри, Çĕнĕ-Чурашри кружоксемсĕр пуçне, ыттисем пĕри те ĕçлеймен.

Кăçал районĕпе 28 учителĕн заочнăй вĕренсе пĕтермеле пулнă. 11 учител вĕренсе тухнă. Розăв, Иегорăв, Михайлăв учителсем заочнăй çеççинчен тарнă.

Кăçалхи çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕç начар пырат. Букскăра ачасене вĕренме 9 клас кирлĕ, 4 клас çеç хатĕр. Туçа, Чурачăк, Чăрăшкасси шкулĕсенче те классем çитмеççĕ. Чурачăкра, Çĕнĕ-Выçлинче, Вăтайалĕнче çĕнĕ шкул çурчĕсене туса пĕтермеле пулнă. Вĕсене хăçан туса пĕтересси паллă мар.

В. Вишневский.

Начар хатĕрленнĕ шкулсем

Çентаберĕн 1-мĕшĕ çывхарат. Çамрăк ăру вăл куна пысăк хавасăлăхпа кĕтсе илет. Вĕренӳ çулĕ пуçланиччен шкулри çитменлĕхсене пĕтерсе, вĕренекенсене лайăх кĕтсе илесси—кашни шкулăн хальхи вăхăтри тĕп задачи пулса тăрат.

Анчах та, Ишлей районĕнчи нумай шкулсем, пайанхи кунчен те, çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленсе çитеймеççĕ. Василкассинчи пуçламĕш шкулăн заведуйущийĕ Смирнов иртнĕ вĕренӳ çулĕ пĕтнĕренпе те шкулта 2 хутчен анчах пулнă. Шкул вĕренӳ çулне хатĕр мар. Партăсем çитмеççĕ, 10 чӳречерен 7-шĕ çĕмрĕлчĕк, кантăксем илсе хатĕрлемен т. ыт. те.

Çӳлтикассинчи туллимар вăтам шкул та çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленсе çитмен. Камакасене йусаман. Партăсем нумайĕшĕ йурăхсăра тухнă, çĕнĕрен илмен. Кĕркуннехи тĕрĕслеве 15 ача хăварнă пулнă, анчах вĕсемпе учителсем пачах та ĕçлемеççĕ, консультацисем туса иртермеççĕ. Шкул директăрĕ Елкин: „Шкул çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленсе çитнĕ", тесе райçутĕç пайне суйа сведенисем панă.

Ишлейри вăтам шкулта та çитменлĕхсем пур. Кунта кĕркуннехи тĕрĕслеве хăварнă ачасен йышĕ пысăк, 62 ача. Вĕсемпе учителсем ĕçлемеççĕ. Консультацисем пулман. Çавăн пиркийех ĕнтĕ ачасем 2-ш çула йулаççĕ.

Ф. Шапăшникăв.

1938 çулти ийулĕн 14-мĕшĕнче Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Йалхуçалăх налогне хурас йĕркесем çинчен" йышăннă постановленири 16-мĕш статйари „л" пункта пăрахăçа кăларасси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă

П О С Т А Н О В Л Е Н И

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнат:

1938 çулти ийулĕн 14-мĕшĕнче Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Йалхуçалăх налогне хурас йĕркесем çинчен" йышăннă постановленири 16-мĕш статйари „л" пункта, вăл йалхуçалăх налогне хурас саккуна тухса тăман пирки, пăрахăçа кăларас.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн замесçтителĕ А. СОМĂВ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕ Н. ЖУКĂВ.

Зайом укçине тĕрĕс пухмала

Шупашкар хули тăрăх илсен ийуль уйăхĕшĕн Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайом укçи 241.087 тенкĕ пухăнмалаччĕ. Анчах та 203.780 çеç пухăннă, рабочисемпе служащисенчен тытса йулнă зайом укçине 298 коллективран 242 коллектив çеç перекет кассине хывнă. 56 коллектив пĕрремĕш тӳлеве те хывман ха. Ку коллективсем шутне ача амăшĕсемпе ачасен сывлăхне сыхлакан институт, Шупашкарти торгăн пĕрле апатланас ĕç уйрăмĕ, Шупашкарти стройтрестăн 3-мĕш строителствă участки, пионерсен çурчĕ, ачасен театрĕ тата ытти организацисем те кĕреççĕ.

Августăн малтанхи çур уйăхри ĕç укçинчен зайом укçи хывмалли срук та иртрĕ. Анчах та 128 коллектив (Деткомиççи хапрăкĕ, Макарон хапрăкĕ, ЧАССР Сутунлӳ Халăх Комиссариачĕ, çăкăр савăчĕ, пульницă, Шупашкарти торг т. ыт. те) зайомшăн укçа тӳлемен.

Коллективсенчи профсойуз организацисемпе комсодсем зайома сарнă чухне лайăх ĕçлерĕç Шупашкар хули тăрăх зайома çырăнасси питĕ хăвтарлă, пысăк организацилĕхпе иртрĕ. Анчах зайом çырăннине укçа тӳленипе çирĕплетес тĕлĕшпе начар ĕçлени сисĕнет. Хăшпĕр коллективсенчи бухгалтĕрсемпе комсодсем, рабочисемпе служащисенчен тытса йулнă укçана вăхăтра перекет кассине куçармалли те манса кайнă. Шупашкар хули совечĕн Çутĕç пайĕ ача сачĕсемпе шкулсенчен 1783 тенкĕ зайом укçи тытса йулнă, анчах та перекет кассине хывман.

Чăвашсен Государствă филармонинчи бухгалтĕр Й. П. Петров рабочисемпе служащисенчен зайом укçи тытса йулас йĕркене пăсса ĕçлеме тытăннă. Зайома мĕн чухлĕ çырăннă хисепрен мар, ĕç укçинчен 10 процент шутласа тытса йулнă. Хотăшĕвран 80 тенкĕ, Лукиăран 60 тенкĕ, Кутаркиăран 60 тенкĕ, Хлебникăвăран 6 тенкĕ тата Цветковран 4 тенкĕ тытса йулнă. Анчах вĕсем зайом çырăннине йĕркелемен.

Кашни ĕçукçи памассеренех зайом укçине çырăннă чухлĕ тĕрĕс тытса йулмала. Йĕркене пăсмасăр ĕçлесе, зайом укçине перекет кассисем урлă государствă бюджетне памала.

С. Филиппăв.

Тӳлесе татаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Хутар йалсоветĕнчи колхозниксемпе йединоличниксем йалхуçалăх налогĕпе Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайом укçисене тӳлесе татаççĕ. Августăн 23-мĕшне йалхуçалăх налог укçине 1282 тенкĕ пухрĕç. Укçа-тенкĕ пухас ĕç Ленин йачĕпе таракан колхозра аван пырат. Халĕ кунта çĕнĕ зайом укçине 1020 тенкĕ пухрĕç.

П. Кимскиă.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНĂВ.

„Чăваш Коммунĕ" сырăнса кăмелли хаксем: пĕр уйăха 2 т. 50 пус, 3 уйăха 7 т. 50 п., 6 уйăха 15 т., çулталăка 30 тенкĕ. Подпискăна сыхăну уйрăмĕсем, письмоносецсем йышăнаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 487. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, Заказ № 868.